24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ИЮЛЬ
18
ЭРНЕКУН
167 (5882) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма вĕренер

Тăшман пирĕн фабрик-заводсем, чугунçул станцийĕсем, электростанцисем, совет гражданĕсен пурăнмалли çуртйĕрĕсем çине çĕр çиничен те сывлăшран та пырса тапăнса, вĕсене çĕмĕрме пултарать. Фашистла вăрă-хурахсем фугаснăй тата вут чĕртсе яракан авиабомбăсем пăрахаççĕ. Тăшман тыпри çĕсене пăсса, Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне хавшатасшăн.

Пирĕн тыла пĕр чарăнмасăр ĕçлемелле туса хумалла. Халăхăн сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма пĕлмелле, тăшман сывлăшран бомбăсем пăрахса кăнĕ сиенсене хăвăрт сирме хатĕр пулмалла. Мĕншĕн тесен фронтри çĕнтерӳ тыл çирĕп пулнинчен килет, çирĕп тыл, кунĕн-çĕрĕн пĕр чарăнмасăр ĕçлекен тыл—çĕнтерӳ тумалли услови.

«Сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентесси çинчен» СССР Совнаркомĕ нумаях пулмасть ятарласа постановлени кăларчĕ. Вăл постановление çапла калать: «Сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма 16 çултан пуçласа 60 çула çитнĕ пĕтĕм халăха обязательнăй йĕркепе вĕрентсе хатĕрлемелле тăвас». Çапла ĕнтĕ, кашни çитĕннĕ çын сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма обязательнăй йĕркепе вĕренмелле, ку ĕçрен пĕр çын та пăрăнса тăма пултарайманть.

Сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма халăха Осоавиахим организацийĕ ПВХО нормисем тăрăх вĕрентсе пымалла. Çавăн пекех, çуртсенчи самозащита групписен инструкторĕсене тата ытти личнăй состава вĕрентсе хатĕрлес ĕçе те Совнарком Осоавиахим организацийĕ çинех хучĕ. Ĕççынни депутачĕсен районсенчи, хуласенчи Совечĕсен самозащита групписене вĕрентсе хатĕрлеме кирлĕ материалсене тата вĕсем валли специальнăй пурлăх хатĕрлесе памалла. Çаксене пур çĕрте пекех пурнăçа кĕртсе пыраççĕ ĕнтĕ.

Совет халăхĕ правительство йышăннă постановление пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕ. Пиншер, вуншар пин çын çар ĕçне вĕренме, сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма вĕренме тытăнчĕç. Совет çĕршывĕн патриочĕсем хăйсен ĕç хыççăнхи вăхăтне пĕтĕмпех оборона ĕçне вĕренес çĕре хураççĕ, вĕсем ĕçлеççĕ, вĕренеççĕ.

Муркаш ялсоветĕнчи (Сĕнтĕр р.) «Авангард», «Ĕç ялавĕ», Сталин тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче самозащита групписем организацилеНĕ. Вăл группăсенче кашнинчех химиллĕ тапăнуран, вут-кăвартан сыхланмалли тата санитарнăй звеносем тунă. Самозащита групписене 100 çынна ытла явăçтарнă. Самозащита групписем тактикăллă вĕренӳ занятийĕсем ирттереççĕ, вăл занятисене ирттерме кирлĕ материалсемпе пурлăх хатĕрĕсем çителĕклĕ таран тупса панă.

Шурут-Нурăс (Первомайски р.) ялсоветĕнче 300 çын, Пăртас (Вăрнар р.) ялсоветĕнче 518 çын ПВХО ĕçне вĕренет. Осоавиахимăн Çĕмĕрле райсовечĕ халăха ПВХО ĕçне вĕрентме кадрсем хатĕрлес майпа унăн кунлăх курс организацилесе, 40 инструктор вĕрентсе хатĕрленĕ, халь тата учительсенчен 70 çын вĕренет. Кун пек примерсем республикăра çĕршĕрĕн шутланаççĕ. Республикăри ĕççыннисем Сталин ялташ чĕнĕвне ĕçпе ответлеççĕ, вĕсем çар ĕçне пĕтĕм вăй-хала хурса, пикенсе вĕренеççĕ. Çаксем пирĕн сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланассине çирĕплетме май параççĕ.

Сталин ялташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса калани сăмахра заводсене, электростанцисене, телефон тата телеграф сыхăнуне сыхлас ĕçе организацилеме, сывлăшран килсе тапăннинчен вырăнта сыхланассине йĕркелесе яма чĕнчĕ.

Предприятисен, учрежденисен, колхозсен руководителĕсем, хуласенчи урам комитечĕсен председателĕсем, партипе совет, комсомол, профсоюз тата Осоавиахим организацийĕсен руководителĕсем умĕнче хальхи вăхăтра тăракан тĕп задача вăл — сывлăшран килсе тапăннинчен вырăнта сыхланассине йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлекен органсене пур енĕпе те пулăшса пырасси пулса тăрать.

Çакна тăвас тесен, предприятисенче, учрежденисенче, хулара пурăнмалли çуртйĕрсенче, колхозсенче самозащита групписем организацилемелле. Вăл группăсен пуçĕнче Осоавиахимăн ПВХО ĕçне лайăх пĕлекен членĕсем тăмалла. Çавăн пек группăсем çук пулсан, вĕсене халех тумалла.

Сывлăшран килсе тапăнсан химикăсем, пожарнăй звеносем, санитарсем, йĕркелĕхе сыхлакан боецсем халăха чи малтан пырса пулăшакансем пулмалла. Группăсен дежурнăйсем тăратас ĕçе тĕплĕн организацилемелле. Самозащита группин сывлăшран тапăнни çинчен, вут-кăвар, химилле хăрушлăх çинчен халăха хăвăрт пĕлтермелле тата халăха убежищĕсемпе хӳтлесе тăмалли вырăнсене вырнаçтармалла, пушар тухсан ăна хăвăрт сӳнтермелле тата аманнисене медицина енĕпе пулăшмалла.

Çаксене тума самозащита групписен малтанах хатĕрлесе çитмелле. Группăн кашни членĕ пикенсе вĕренмелле, ĕçлемелле. Тăшман кăнтăрла та, çĕрле те, уяр чухне те, çăмăрлă çанталăкра та килсе тапăнма пултарать. Çавăнпа та самозащита групписем çаксене йăлтах шута илсе, практикăллă занятисене тĕрлĕ вăхăтра тата тĕрлĕ çанталăкра туса ирттермелле. Самозащита группи тăвакан ĕç вăл — государствăшăн питĕ те пысăк вырăн йышăнакан ĕç. Çавăнпа та ун çине пĕтĕм ответлăха туйса пăхмалла.

Кашни гражданин килте, хăй ĕçлекен предприятире, учрежденире колхозра сывлăшран килсе тапăннинчен мĕнле сыхланмаллине пĕлмелле, хăй ĕçлекен вырăна тата пурăнмалли пӳлĕме светомаскировка тума, пушар сӳнтерме, аманнă çынна пирвайхи пулăшу пама пĕлес пулать.

Пушартан сыхланас çĕрте кил-çуртсене, пӳрт умсене, пусма картлашкисене, пӳрт тăррисене, килкартишне таса тытни пысăк вырăн йышăнать. Мĕншĕн тесен сӳлте асăннă вырăнсем таса мар, çӳп-çапăллă пулни авиабомбăсем ӳкнĕ вырăнта вут-кăвар сарăлса кайма май парать. Çавăнпа та ĕнтĕ кашни çын хăйĕн килçуртне, хăй ĕçлекен предприятине, учреждениие таса тытмалла.

Çавăн пекех, Осоавиахим организацийĕсен сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран пĕчченшерĕн сыхланма кам мĕнле хатĕрленнине те тĕрĕслесе тăмалла, ку ĕçре халăха пулăшмалла. Чылайăшĕн харпăр-хăйĕн противогазсем пур. Çав противогазсене тĕрĕслемелле, юсавлă маррисене хăвăрт юсас ĕçе йĕркелемелле. Çак практикăллă ĕçсене пĕтĕмпех халăха сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма вĕрентсе хатĕрлессипе çыхăнтарса пымалла.

Осоавиахимовецсем—социализмлă тăван çĕршывăн патриочĕсем! Çар ĕçне пĕтĕм вăй-хала хурса вĕренĕр, халăхăн йышлă массисене сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕрентсе хатĕрлер. Ĕçри вăй-хала вунтăр хут ӳстерсе ĕçлесе, тăшмана çĕнтерме большевиксен партине тата Совет правительствине пулăшса пырар!

Пурте оборона ĕçне вĕренмелли кружоксене, группăсене, командăсене!



Отечественнăй вăрçă геройĕсем. Политрук К. Касумов ялташ хăйĕн подразделенийĕнчи боецсен ушкăнĕпе нимĕçсем вăйлăн персе тăнă вăхăтрах виçĕ кĕпер çĕмĕрсе тăкнă. Саперсем командованин заданине ăнăçлăн пурнăçланă, тăшман вăйĕсене совет çĕрĕ çине каçма чăрмантарнă. **Унерчĕк çинче** (сылтăмран сулахаялла): политрук Касумов тата унăн подразделенийĕнчи кĕпersене çĕмĕрес ĕçе хутшăннă боецсем Маркуца, Христиченков, Бухтияров тата Цедин ялташсем. Г. Зельм фото-ӳкерчĕкĕ. ТАСС).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче политикăллă пропаганда органĕсене реорганизацилесси тата çар комиссарĕсем пулмалла тăвасси çинчен

Пирĕн çине тапăннă пирки пуçланнă вăрçă Хĕрлĕ Çарти ĕçĕн обстановкине тĕпренех улăштарчĕ. Вăрçă пирĕн çарти политикăллă ĕçĕн пысăккăшне анлăлатрĕ тата çапла тума хушрĕ: политработниксем хăйсен ĕçĕнче пропаганда кăна туса пымалла мар, çавăн пекех фронтсенчи вăрçă ĕçĕсемшĕн те хăйсем çине ответлăх илмелле.

Тепĕр енчен, вăрçă полкри тата дивизири командирăн ĕçне йывăрлатрĕ, вăл çапла тума хушать: полк тата дивизи командирне политикăллă работниксем политикăллă ĕç енĕпе кăна мар, вăрçă ĕçĕ енĕпе те кирлĕ пулăшăва йăлтах памалла.

Политработниксен ĕçĕнчи çак мĕнпур çĕнĕ обстоятельствăсем, мирлĕ вăхăтран вăрçă ăхăчĕ çине куçнипе çыхăнса тăракан обстоятельствăсем, çапла тума хушаççĕ: политработниксем ролĕпе ответлăхне, ютçĕршывсен вăрçăллă интервенцине хирĕç пынă граждăн вăрçинче пулнă пекех, ӳстермелле.

Çакна май тата Оборонăн Государственнăй Комитечĕпе Главкомсем кăмăл тунине шута илсе, ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ **çапла йышăнать:**

1. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн политикăллă пропаганда Управленийĕсемпе отделĕсене реорганизацилесе, **политикăллă Управленисем** тата **политикăллă отделсем** тăвас.

2. Хĕрлĕ Çарăн мĕнпур полкĕсенче тата дивизийĕсенче, штабĕсенче, военно-учебнăй заведенисемпе учреждениесенче **çар комиссарĕсем** пулмалла тăвас, ротăсенче, батарейăсенче, эскадронсенче **политикăллă руководительсем** пулмалла тăвас.

3. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн полкĕсенчи тата дивизийĕсенчи çар комиссарĕсем çинчен кăларнă Положение çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июлĕн 16-мĕш.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ çирĕплетнĕ

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн çар комиссарĕсем çинчен кăларнă

ПОЛОЖЕНИ

1. Хĕрлĕ Çарăн мĕнпур полкĕсенче тата дивизийĕсенче, штабĕсенче, военно-учебнăй заведенийĕсемпе учрежденийĕсенче, фронтра та, çавăн пекех тылра та, çар комиссарĕсем пулаççĕ.

2. Çар Комиссарĕ Партипе Правительствăн Хĕрлĕ Çарти представителĕ пулса тăрать тата войскăсен чăсĕ боевой задачăна пурнăçа мĕнле кĕртнишĕн, çав часть çапăçура çирĕп чăтăмлă пулассишĕн тата Тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма, совет çĕрĕн кашни пусăмне чыслăн кӳтлесе хăварма пĕр пăркаланмасăр хатĕр тăрассишĕн командирпа пĕрлех пур енчен те ответлă пулса тăрать.

3. Çар Комиссарĕ хăйĕн чăсĕн (соединенийĕн) нравственнăй руководителĕ, унăн материальнăй тата духовнăй интересĕсене хӳтлекен пĕрремĕш çын пулса тăрать. «Полк командирĕ полкăн пуçлăхĕ пулса тăрать пулсан, полк комиссарĕ вара хăйĕн полкĕн ашшĕ тата чунĕ-чĕри пулма тивĕçлĕ» (Сталин).

4. Çар Комиссарĕ боевой задачăсене тӳрĕ кăмăлпа тата пĕтĕм вăй-хала парса пурнăçа кĕртсе пыракан командира унăн мĕнпур ĕçĕнче пур майсемпе те пулăшса пыма, командирăн авторитетне çирĕплетсе пыма тата высший командованин мĕнпур приказĕсене пурнăçа кĕртнине çирĕппĕн контроллесе тăма тивĕçлĕ.

5. Командирпа политработникăн званине тивĕçлĕ мар тата хăйсен юрăхсăр ĕçĕсемпе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн чыслăхне варалакан командирсемпе политработниксем çинчен Çар Комиссарĕ Верховнăй Командованине тата Правительствăна вăхăтра пĕлтерме тивĕçлĕ.

6. Çар Комиссарĕ хамăран Тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç кĕрешмĕшкĕн войскăсене хавхалантарса пыма тивĕçлĕ. Çапăçăвăн ытларах йывăр саманчĕсенче Çар Комиссарĕ хăй хăюллăхпа паттăрлăх примерне кăтартса войскăсен чăсĕн çапăçури хастарлăхне хăпартма тата боевой приказа пĕр сăмахсăр пурнăçа кĕртмелле тума тивĕçлĕ.

7. Çар Комиссарĕ чи лайăх боецсемпе командирсене хавхалантарса пыма тата вĕсене пурте пĕлсе тăмалла, хисеплемелле тума тивĕçлĕ, войскăсен чăсĕн личнăй составне паттăр, хăюллă, çирĕп, пуçаруллă, тавçăруллă пулмашкăн воспитани парса пыма, вилĕм çине пĕр шиксĕр пăхма тата хамăрăн Тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç вĕсене çĕнтериччене х кĕрешмешкĕн хатĕр тăма вĕрентсе воспитани парса пымалла.

8. Çар Комиссарĕ, красноармеецсемпе командирсен анлă массисем çине таянса, хăравçăсене, паникерсене тата дезертирсене хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешме тивĕçлĕ, революциллĕ йĕркелĕхе тата çарти дисциплинăна çирĕп алăла тĕреклетсе пыма тивĕçлĕ. Хăйĕн ĕçĕсене Оборона Халăх Комиссариачĕн Виççĕмĕш Управленийĕн органĕсемпе килĕштерсе туса пырса, Çар Комиссарĕ мĕнпур йышши сутăнчăклăха тĕпренех пĕтерсе пыма тивĕçлĕ.

9. Çар Комиссарĕ политоргансене, çавăн пекех тата войскăсен чăсĕнчи парторганизацисемпе комсомол организацийĕсене ертсе пырать.

10. Политрук хăйĕн ĕçĕсенче полк комиссарне пăхăнса тăрать, полк комиссарĕ — дивизи комиссарне, дивизи комиссарĕ — Армин Военнăй Советне тата Хĕрлĕ Çарăн Политикăллă Главнăй Управленине.

11. Полк, дивизи, управлени, учрежденисем тăрăх паракан мĕнпур приказсене командир тата Çар Комиссарĕ алă пусса кăлараççĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 16-мĕшĕнче Псков, Смоленск, Бобруйск тата Новоград-Волынск енĕсенче пысăк çапăçусем пынă.

Иртнĕ кун хушшинче пирĕн авиаци массăллăн пыра-пыра çапса противникăн мотомехчăçĕсене пĕтере-пĕтере тăкнă, унăн аэродромсенчи авиацине, противникăн переправăсем çинче пухăнса тăнă войскисене атакăланă, Плоешти районĕ çине, Сулинăри, Тульчăри тата Исачари нефть тиенĕ транспортсемпе баржăсем çине бомбăсем кайса пăрахнă.

* * *

Противникăн тылĕнче пирĕн разведка нимĕçсен пысăк мар, анчах та тĕплĕн пытанса тăракан аэродромне тупнă. Пирĕн чăçсем аэродром патне сывхарса пырсан, фашистсен 8 самолечĕ вĕçсе хăпарма хăтланнă, анчах та моторсенче кăлтăксем пулнипе çĕр çинчех юлнă. Техник Вильгельм Мейер пирĕн командованине çапла пĕлтернĕ: аэродромăн технически составĕ наступлени туса пыракан совет войскисене тытăкăна парăнма йышăннă, çавăнпа та, офицерсене вĕçсе кайма парас мар тесе, моторсене юриех пăснă, тенĕ. 12 механик тата вĕçев составĕнчен 27 çын пирĕн енне куçнă.

* * *

Июлĕн 15-мĕшĕнче Советлă Бессараби территорийĕ çине Венгри бомбардировщикĕ анса ларса тытăкăна парăннă. Экипажри летчиксем: эпир фашистла Германи интересĕсемшĕн вăрçасшăн мар, тесе калаçнă.

* * *

Пирĕн войскăсем пыра-пыра çапнипе Рогачев хулинчен каялла чакса пынă вăхăтра противникăн танковăй батальонне хупăрласа илнĕ тата пĕтерсе тăкнă. Тăшмансен 6 танкĕн экипажĕсем çавтери халран кайса çитнĕ пулнă, нумай танкистсем урăх çын пулăшмасăр машинăсем ăшĕнчен тухма та пултарайман. Тытăкăна илнисене медицина енĕпе пăхса тухни çакна кăтартса панă: тытăкăна лекнисем çапла халран кайса çитни вăл — тăтăшах тăраниччен çиеймеННин тата ытлашши ывăнса çитнин результачĕ пулса тăрать.

* * *

Пирейра (Греция) Итали дивизийĕнчи салтаксем хушшинче, вĕсене Турция чиккине кăларса янă май, пысăк пăлханусем пулса иртнĕ. Турци чикисем патне куçарса пыракан итальянецсен ытти чăсĕсенче те çавăн пек пăлханусем пулнă.

* * *

Гитлер хĕвелтухăç фронтне янă фашистсен штурмовой отрячĕсем палачсен ĕçне туса пыраççĕ. «Свободный труд» ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксен группине тытса, гитлерла сыхçисем вĕсене хурçă пралукран тунă, тăхлан вĕçлĕ чăпăрккасемпе тискерĕн хĕнесе тăкнă. Тăн çухатса пĕлми пулнă колхозниксене пĕр çĕре купаласа хунă, краççин сапнă та çунтарса янă. Колхоз патĕнчен темиçе километрта фашистсем полевой лазарета çавăрса илнĕ, унта йывăр аманнă 23 красноармеец пулнă. Штурмовиксем красноармеецсене допрос тума пуçланă, совет çарĕн чăсĕсем ăçта вырнаçса тăни çинчен тата вĕсен хăвачĕ çинчен сведенисем илме хăтланнă. Хăйсене мĕн кирлине илейменĕр, урса кайнă фашистсем аманнă çынсенчен икĕ сехет хушши мăшкăланă, сурансене çыхнă марлясене тăпăлтарса илнĕ, унтан аманнă боецсене ял урамĕн варринче иртсе каякан телеграф юписем çине çакса вĕлернĕ.

* * *

Оккупациленĕ çĕршывсенче Германин çар судĕсем кашни кунах тискер приговорсем пиншер приговор йышăнаççĕ. Нимĕçсене намăслантарса кӳрентернĕшĕн, Германи çар влачĕсене хирĕç тăнăшăн, саботажла ĕçсем тунăшăн фашистсем французсене, бельгиецсене, норвежецсене, голландецсене, поляксене, грексене, сербсене, болгарсене, чехсене, румынсене, венгерсене судпа айăпласçĕ. Германире шахтăсенче ĕçлекен французсене, поляксене, бельгиецсене тата итальянецсене тискер эксплоатацине хирĕç кăштах протест тунăшăн та çар судĕсем хаярăн айăпласçĕ. Фронтра кăнтăрла та çĕрле те çар судĕсен ларăвĕсем пыраççĕ. Берлинри радиосӳлĕтĕве хирĕç, «фюрера» хирĕç хисеплемесĕр пĕр сăмах кăна калакансене те уйрăмах хаярăн айăпласçĕ. Вăрçăра тытăкăна лекнĕ нимĕç, Гамбург портĕнче служащи пулнă Адольф Ш. çапла пĕлтернĕ: унăн землякĕ Людвиг Бауэр салтаксем хушшинче çапла калать: «Гитлер пуринпе те вăрçать. Халĕ ĕнтĕ нимĕçсене пур çĕрте те кураймаççĕ тата ылханаççĕ», тенĕ. Çакăншăн Бауэра асаплантарса вĕлернĕ. Брюссельре çар судĕ виçĕ нимĕç салтакне вĕлермелле тунă, мĕншĕн тесен вĕсем магистрат патне çăкăр ыйтма пынă хĕрарăмсемпе ачасем çине пăшалсенчен пеме килĕшмен. Фашистсен çар судĕн машинине пĕтĕм вăйпа ĕçлетереççĕ. Фашизма хирĕçле шухăш-кăмăлсем ӳссе пыраççĕ, салтаксен массисем хушшинче сарăлаççĕ. Çакна ĕнтĕ гестапона çар судĕсем те чăрмантарма пултараймаççĕ.

* * *

Усал та ултавлă тăшмана çĕмĕрес ĕçре Хĕрлĕ Çара пулăшу паракан çулăмлă совет патриочĕсен — стахановецсен, изобретательсемпе рационализаторсен творчествăлла шухăшĕ вăйлă çăлкуçĕ пек тапса тăрать. Мичуринскри вагон деповĕнче ĕçлекен çамрăк рабочи слесарь-автоматчик Гугняев ялташ нормăна кашни кунах 800—1000 процент тултарса пырать. Ишем деповĕнчи слесарьсем— мастер Ермишин ялташ ертсе пынипе ĕçлекен Иванчук, Пономарчук тата Ваганов ялташсем буксовăй подшипникне нормăпа 34 сехет хушши юсас вырăнне виçĕ сехет хушшинче юсаса пĕтернĕ. Кувшинск заводĕнчи строгальщик Смирнов ялташ нормăна 700 процент тултарса пырать.

Фашистла Германине хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешесси çинчен Совет Союзĕпе Англи правительствисем хушшинче тунă килĕшӳре ĕççыннисем ырласа саламлани çинчен калакан сведенисем халĕ те килеççĕ. Воронков ялташ Выкса хулинчи металлургсен шухăшпе палăртса, çапла калать: «Халĕ ĕнтĕ фашистла ордасене сывлăшра та, çĕр çинче те, тинĕсре те вĕрирех пулать. Эпир пурне те фронт нушисене пăхăнтаратпăр, фашизма — этемлĕхĕн тăшманне хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас ĕç валли мĕн кирлине йăлтах параратпăр». Молотов облаçĕнчи Молотов ячĕпе тăракан заводри цех начальникĕн помощникĕ Коновалов ялташ çапла калать: килĕшӳ вăл — Сталин ялташ ăсĕпе тата вăл инçетрине курса тăнипе тунă ĕç. «Тĕнчери питех те пысăк икĕ государство хушшинче тунă килĕшӳ, — тенĕ Сталин ячĕпе тăракан завод цехĕнчи мастер Юганов ялташ, — Германи фашизмне пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе пĕтерсе тăкма май парать».

Çĕршыв оборонине тĕреклетме

Çак кунсенче Çĕрпӳ хулинчи потребкооперацин обществин уполномоченнăйĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура пулнă уполномоченнăйсем Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин ялташ радио тăрăх пĕтĕм ĕççыннисене тăван çĕршыва фашистла вăрă-хурахсенчен сыхласа хăварма чĕнсе каланине ырласа, пурте пĕр çын пек пулса çĕршыв оборонине тĕреклетсе пыма сăмах панă. Çак пухурах, потребитель обществин уставĕ тăрăх пайщиксене валеçсе памалли 50 пин тенкĕ укçана йăлтах çĕршыв оборонине тĕреклетнĕ çĕре пама йышăнчĕç. — Пирĕн кашни пус укçа фашистсене çапса çĕмĕрме пулăштăр,— тесçĕ вĕсем.

Г. ПЕТРОВ.

* * *

ИЕПРЕÇ. Районри нумай колхозсенче тата предприятисемпе учрежденисенче ĕçлекенсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи сăлăрăм) Заем укçине срокчен тӳлесе татаççĕ. Иртнĕ вунă кун хушшинче районри перекет кассине колхозниксемпе единоличниксенчен 27 пин тенкĕ укçа пырса кĕнĕ.

Машинно-тракторнăй станцинче ĕçлекен работниксем заема 16.570 тенкĕлĕх сырăнса укçине те пĕтĕмпех парса татрĕç. Çавăн пекех, крахмал заводĕнчи рабочисемпе служащисем те подписка укçине çуррине, 1885 тенкĕ пухса перекет кассине кайса хывнă.

Паянхи кун тĕлне районĕпе заем укçине 114 пин тенкĕ ытла пухнă. Çĕнĕ заема сырăннă кашни ĕççыннин подписка укçине хăвăртрах парса татма васкать.

Ф. КИРИЛЛОВ.

* * *

Сынвĕлерен фашистсем пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăннине хирĕç ответлесе, МТС коллективĕ çуракине кăтартуллăн ирттернĕшĕн машинно-тракторнăй станцийĕ илнĕ 4 пин тенкĕ премине çĕршывăн оборона фондне хывать. Тăшмана çĕнтерме Хĕрлĕ Çара пур енчен те пулăшса пырăпăр. Машинно-тракторнăй станцин ĕç планĕсене срокчен тултарăпăр.

Чкаловски МТС директорĕ
ШОРНИКОВ.
Парторганизаци секретарĕ
НЕСЫБУЛЛИН.

Хĕрлĕ Çара пулăшма— халăхăн хăватлă ополченийĕ

Хĕрлĕ Çаран хăватлă резервисем

Шупашкарти госбанкра ĕçлекенсем Водопьянов ячĕпе тăракан комбинатри рабочисен пуçарăвне пысăк хавхаланупа йышăнса илчĕç. Вĕсем Аслă çулпуç Сталин чĕнĕвне ответлесе, халăх ополченийĕн ретне йышлăн тăчĕç.

Июлĕн 15-мĕшĕнче пулса иртнĕ митингра коммунист Киселев юлташ çапла каларĕ:

— Фашистла ирĕрсем пирĕн пуянлăха, телейлĕхе тытса илесшĕн. Анчах вĕсен ирĕр ĕмĕчĕ нихăçан та пурнăçа кĕрес çук! Хĕрлĕ Çарпа пĕрле пĕтĕм Совет халăхĕ отечественнăй вăрçа çĕкленсе тухрĕ. Мана комсомол, Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе çитĕнтерчĕç, эпĕ тăван çĕршывăн, Ленин—Сталин партийĕшĕн хамăн пурнăçа пама та хатĕр. Фашизма хирĕç кĕрешме халăх ополченийĕн ретне илме ыйтатăп.

Коммунистсен те, беспартийăйсен те, пурин те пĕр ĕмĕт—пирĕн чечекленсе пыракан тăван çĕршыв çине килнĕ хăрушă хура çăхансене пуçне касса вилĕм шăтăкне пăрахасси. Ирĕр фашизм çакна кĕтет, унăн кунĕсем кĕскелсе пыраççĕ.

Госбанкри местком председателĕ Налимов юлташ хăйĕн заявленийĕнче çапла çырать: «Тăшмана çĕмĕрсе тăкас çĕрте манăн хамăн пулас килет. Çавăнпа та мана халăх ополченийĕн ретне илме ыйтатăп».

Госбанкра ĕçлекенсем Щеглов (главнăй кассир), Стекольщиков (инспектор), Захаров (управляющи), Денисов (старший ревизор), Корчагин (управляющин заместителĕ), Ананьев, Алексеев, Ильин, Шумилов т. ыт. юлташсем хăйсене халăх ополченийĕн ретне илме ыйтса заявленисем панă. Пурте вĕсем тăван çĕршывăн хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешме хатĕрри çинчен пĕлтереççĕ.

Митингра йышăннă резолюцире çапла каланă:

«Совет халăхĕ хăйĕн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ чĕнсе каланине халăхăн хăватлă ополченине тунипе ответлет. Халăхăн çав хăватлă вăйĕ фашизма çĕмĕрсе тăкас çĕрте пысăк вырăн йышăнĕ. Совет халăхĕ, ирĕклĕхе юратакан Великобритани халăхĕпе пĕрле, Гитлерăн вăрă-хурахла ĕçĕсене чарса лартĕ.

Фашизма çĕнтерме çăмăл мар. Çавăнпа та пирĕн тыла кашни кун çирĕплетсе пымалла, халăх ополченийĕн ретне тăрса Хĕрлĕ Çара валли резервсем хатĕрлесе пымалла.

Пĕтĕм вăя тăшмана çĕмĕрсе тăкма!

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пире çĕнтерӳсем патне илсе пыракан Аслă Сталин!»

Пĕр шухăш, пĕр кăмăл

Июлĕн 15-мĕшĕнче каçхине Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи агрономсем, инженерсем, землеустроительсем, зоотехниксем, гидротехниксем тата ытти специалистсем митинга пуçтарăнчĕç.

Партбюро секретарĕ Ананьев юлташ пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ Гитлерăн йыт кĕтĕвне халяр отпор пани çинчен каларĕ, унтан митинг участникĕсене Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи рабочисен чĕнĕвĕ çинчен пĕлтерчĕ.

Çĕрĕç специалисчĕсем, пĕрин хыççăн тепри тухса каласа, ну чĕнĕве кăмăлтан ырлаççĕ, пĕтĕм коллективпа халăх ополченийĕн ретне тăма чĕнеççĕ.

— Совет халăхĕ акса çитĕнтернĕ тулă хирĕсене, турат йăтса тăрайми çимĕç сачĕсене фашистла вăрă-хурахсем таптаймĕç, — тет ватă агроном Никитин юлташ.—Хăватлă Хĕрлĕ Çара пулăшма нумай миллионлă ополчени çĕкленсе тăрать. Эпĕ те ополчени ретне тăратăп.

Митингрpreс работниксем заявленисем пама тытăнаççĕ.

Агроном пулса 26 çул ĕçлекен Косминский юлташ хăйĕн заявленийĕнче çапла çырать:

— Эпĕ 50 çулта ĕнтĕ, анчах алла винтовка тытма, ирĕр тăшмана çĕр çинчен тасатиччен кĕрешме манăн вăй çителĕклĕ. Ирĕклĕхшĕн, тăван çĕршывăн чысĕшĕн, Сталиншăн хамăн пурнăçа хĕрхенмесĕр çапăçма тупа тăватăп.

Ватă агроном Мочалов юлташ хăйĕн заявленийĕнче совет патриочĕн паянхи шухăш-кăмăлне кăтартса панă.

— Эпĕ граждан вăрçин участникĕ, — тет Мочалов юлташ, — Дутовпа Колчакăн шурă çарĕсене хирĕç, белополяксене хирĕç çапăçрăм. Мана виçĕ хутчен сураплатрĕç, анчах алăри винтовкăна пăрахмарăм, çамрăк совет республикине кăкăрпа сыхларăм, хамăртан темиçе хут вăйлă тăшмана çĕмĕрсе тăкрăмăр. Халĕ, социализмлă тăван çĕршыв умне хăрушлăх килсе тухнă кунсенче эпĕ, аслă Сталинăн чĕнĕвне йышăнса илсе, каллех алла винтовка тытатăп, халăх ополченийĕн ретне кĕретĕп.

Нарком заместителĕ Измайлов, агрономсем Беляев, Осанов юлташсем тата ытти сем те заявленисем параççĕ, пурин те пĕр шухăш, пĕр кăмăл — социализмлă тăван çĕршыва фашистла варварсенчен сыхласси, тăшмана пĕр хĕрхенӳсĕр çĕмĕресси.

Митинг пĕр саслă пулса çакăн пек резолюци йышăнать:

— Эпир юратнă тăван çĕршыва сыхлакансен малти ретне тăма кашни минутăрах хатĕр пулни çинчен пĕлтеретпĕр. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕн, юратнă çулпуçăн Сталин юлташăн чĕнĕвне йышăнса илсе халăх ополченийĕн ретне тăратпăр.

Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç. Эпир çĕнтеретпĕрех!

Сывă пултăр пирĕн хаклă тăван çулпуç Сталин!

Н. ВОЛКОВ.

Халăх ополчени тăвать

Пĕтĕм совет халăхĕ хаяр тăшмана — Германин юнлă фашизмне хирĕç отечественнăй вăрçа çĕкленчĕ. Эпир, совет çыннисем, çĕршыв умĕнчи хăрушлăха пĕр минутăлăха та манма пултараймастпăр.

Совет çĕршывĕн кашни патриочĕ фронта пулăшасси çинчен шухăшлать. Икçĕр миллионлă совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ, Совет правительстви, Сталин юлташ тавра татах та тачăрах пĕтĕссе тăрать. Пирĕн халăх тăван çĕршывăн, ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçăн фашистла вăрă-хурахсене хирĕç юлашки юн тумламĕ юлмиччен кĕрешме хатĕр.

Эпир çĕнтерессе шанса тата пĕлсе тăратпăр. Паллах, çапăçу хаяр пулать, анчах çĕнтерӳ пирĕнтех пулать.

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ чĕнсе каланине ответлесе, совет халăхĕ тăван çĕршывăн паттăрăн кĕрешекен боецсен ретне тăрать, ĕç тухăçлăхне нихăçанхи пек мар пысăккăн ӳстерет, халăх ополченийĕн ретне тăрать.

Шупашкар хулинчи предприятисемпе учрежденисенче халь нумай çынлă митингсемпе пухусем пулса иртеççĕ, халăх ополченийĕ тăваççĕ. Халăх ополченийĕн ретне арçынсемпе хĕрарăмсем, гражданăсем, вăрçин участникĕсем тăраççĕ. Тир-сăран тата çăкăр комбинатĕсенче, типографинче, ликероводочнăй заводра тата ытти вырăнсенче те пулса иртнĕ пухусенче халăх ополченийĕн ретне тăма çĕршер çын заявлени панă.

Спиртзаводри мастер-комсомолец Чегонисов юлташ хăйĕн заявленийĕнче çапла çырать: «Фашистла Германи манăн тăван çĕршыв çине тапăннине хирĕç кĕрешĕве тухма, сĕмсĕр тăшмана çĕмĕрсе тăкма мана халăх ополченийĕн ретне йышăнма ыйтатăп». Çав заводри 70 çулхи старик Люминарский юлташ хăйĕн заявленийĕнче: «Эпĕ 70 çулта, анчах мана халăх ополченийĕн ретне йышăнма ыйтатăп, тăшман пирĕн çĕр çине ан таптатăр»,—тесе çырнă.

— Эпĕ—граждан вăрçин участникĕ, хальхи вăрçăна хутшăнмасăр юлма пултараймастăп,—тесе çырать спиртзаводри рабочи Долматов юлташ.

Пĕтĕм халăх урса кайнă тăшмана хирĕç çĕкленчĕ. Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç. Тăшмана пĕр хĕрхенмесĕр çапса аркататпăр. Комсомолецсемпе комсомолкăсем, халăх ополченийĕн ретне тăрăр.

А. ЭРРЭ.
ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ.

Икĕ аслă державăн союзĕ фашизма çĕмĕрсе тăкать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Почтальон хаçатсем илсе пырсанах, Именкасси ялсоветне кĕрекен колхозсенчи агитаторсем утă çулнă çĕрте ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем патне тухса карĕç. Вĕсем унта колхозниксемпе колхозницăсене Совет Союзĕпе Великобритани правительствисем гитлерла Германие хирĕç пĕрле пулса кĕрешесси çинчен тунă килĕшӳ çинчен ăнлантарса панă.

Колхозниксемпе колхозницăсем Совет Союзĕпе Великобритани правительствисем гитлеризма пĕтерме тунă историллĕ килĕшӳве питĕ ырлаççĕ.

— Совет Союзĕнчи халăхсемпе Великобритани халăхĕсем Германи фашизмне хирĕç пĕр пулса çапăçса, гитлеризма çĕр çинчен сирсе пăрахасса эпир шанса тăратпăр,—теççĕ колхозниксем.

Колхозсенче производствăллă активлăх кашни кунах ӳссе пырать. «Победа», «Новая сила» колхозсем государствăна тĕштырă тăратас плана тултарнă. Çакăн пек колхозсем районра 21 шутланаççĕ. «Победа» колхоз членĕсем государствăна 1941 çултăн аш-какай парса татнă, 1942 çултăн та аванс шучĕпе пама тытăннă.

Районри 17 колхоз государствăна утă парса татнă. Сĕт-çу, аш-какай парса татнă колхозсем районра вуншарăн шутланаççĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Действующи Хĕрлĕ Çар. Н. юханшыв районĕнче командир Гаврилов юлташ подразделенийĕнчи танкистсем атакăна кĕрсе, вăйлăн çĕмĕрсе тăшмана хăваласа янă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: комсомолецсен çинчен тăракан танк экипажĕ. Сулахайран сылтăмалла: башня стрелокĕ В. Н. Королев, механик-водитель В. М. Леонов тата командир С. Е. Обухов. В. Иванов фото-ӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

Совет Союзĕн Геройĕ Михаил Жуков

Кĕçĕн лейтенант Михаил Жуков аэродром çине халь кăна вĕçсе килчĕ. Унăн хĕвелпе пиçсе хуралнă пичĕ тусанпа витĕннĕ. Вăл хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле киле паркри пĕве патне каять, хăвăртăн салтăнса сивĕ шыв çине мăнаçлăн сикет:

Тепĕр темиçе минута хыççăнах вăл каллех летнăй формăпа.

— Çапах та пирĕн Атăл çинче шыва кĕме аванрах,—тет вăл, хăйĕн кĕскен каснă çӳçне якатса.

Пĕр-пĕринпе вăй танлаштарасси, çĕнтересси, малтанах шутланă ĕмĕте пурнăçа кĕртесси—çаксем пурте Михаил Жукова яланах тарăнăн шухăлаттараççĕ.

Ярославль хулинчи резинăпа азбест комбинатĕнче слесарь-электрик пулса ĕçленĕ чух вăл летчик пулма ĕмĕтленнĕ.

— Пĕлӳ сахалтарах-ха сирĕн,—тенĕ ăна приемнăй комиссинче.

— Çук, эпĕ кирлĕ пĕлĕве часах тупатăп,—тенĕ Жуков, вăл хăйне летчик ĕçне вĕренмелли шкула илме йăлăннă.

Приемнăй комисси ĕненнĕ ăна. Вăл питĕ тăрăшса вĕреннĕ, пур ĕç çине те тимлĕн сăнаса пăхнă.

1936 çулта çулла Жуков хăй тĕллĕн вĕçмешкĕн чи малтанхи хут право илнĕ, кун хыççăн вара вăл военнăй летчик пулма шутланă. Çак ĕмĕте вăл сирĕппĕн ĕненнĕ.

...Çар шкулĕнче занятисем вĕçленнĕ тĕле белофинсене хирĕç хаяр кĕрешӳ пуçланнă. Михаил Жуков та, хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле, хăйне фронта яма йăлăннă.

— Вĕренĕр-ха,—тенĕ вĕсене шкул начальникĕ.

* * *

Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕнче çак летчик-истребитель кĕçĕн лейтенант Михаил Жуков Н-ски аэродром çинче пулнă. Июнĕн 23-мĕшĕнче вăл малтанхи боевой вĕçевре пулнă. Çав кун вăл пирĕн чи хаклă та кирлĕ пĕр çар объектне хуралланă. Кăн-кăвак горизонт еннелле çивĕччĕн тинкерсе пăхнă. Паллах, кăштах иккĕленнĕ те пуль... Анчах пирвайхи сехетре шикленсе хăрани пулма та пултарать. Халь-халь çакăнта тăшман самолечĕ килме пултарнă, халь-халь çакăнта хăрушă çапăçу пуласси курăннă.

— Противника вăл кун ниепле те курма тӳр килмерĕ,—тет Жуков.—Тепĕр кун вара, эпĕ хама панă боевой заданине пурнăçа кĕртнĕ чух, сывлăшра фашистсен «Юнкерс-88» бомбардировщикне асăрхарăм. Вăл, хура пĕлĕтсем айĕпе пытанса, пирĕн П. хула еннелле йăпшăнса пыратчĕ... Паллах, вăл пире сискĕнчĕксĕр килсе çапасшăн пулнă пулас. Анчах, тăшман ĕмĕчĕ ăнăçсăр пулчĕ!

Михаил Жуков хăйĕн хăюллă машинине тӳрех фашистсен выçă çăханĕ çинелле тытнă.

— Пин метра яхăн çеç юлчĕ,—тесе каласа парать вăл,—фашистсен çăханĕ каялла çавăрăнчĕ, тарма тытăнчĕ. Мана ку кӳрентерчĕ. «Хăрарăн-и, çăхан!»—кăшкăртăм хыçран. Çав самантрах ăна хуса çитсе, хамăн пулеметран тăхланпа шăвартăм.

Михаил Жуков кăмăлсăр пулнă. Вăл аэродром çине вĕçсе пырсанах, вĕсен командирĕ пилот кăмăлсăр пулнине асăрханă.

— Юрать, ан иккĕленĕр,—тенĕ командир ăна.—Тăшмана паян асăнтаймарăр пулсан, ыран ак ăна ĕмĕр манмиех асăнтарса хăварăр.

Тепĕр кунхине, сывлăша хăпарсан, Жуков хăйĕн самолечĕ çинчен аялалла пăхнă: çĕр çинче колхозсен уйхирĕсем ешĕрсе ларнă, симĕс улăхра таса шыв шăнкăртатса юхнă, ун хĕрринче тулă та мăнтăр выльăхсен кĕтĕвĕ çӳренĕ. Çулсем тăрăх машинăсемпе лавсем ирте-ирте кайнă. Чугунçул станцийĕ патне таварçем тиенĕ поезд пырса тăнă.

«Çук, тискер фашист кунта килсе кĕреймест, эпир ăна кунта яхăнне те ямастпăр»,—шухăшланă Жуков.

Часах вăл хăйĕн аэродромĕ çине анса ларнă. Çав вăхăтра тăшманăн сакăр бомбардировщикĕ горизонтра курăннă.

Сывлăша ытти пилотсемпе пĕрле Михаил Жуков та хăпарнă.

— Фашистсем, пире курсанах айăккинелле тарчĕç,—каласа парать вăл.—Эпир вĕсем хыççăн. Вĕсем пĕлĕтсем хушшине тарса кĕчĕç. Çук, çавах тарса хăтăлаймарĕç! Вĕсем пирĕнтен темиçе хут нумайăн, çапах та эпир вĕсем çине хăюллăн пырса кĕтмĕр. Эпĕ хура пĕлĕт хушшинчен пĕр бомбардировщик сиксе тухнине куртăм. Хам та сисмерĕм, эпĕ: «Ну, халĕ ĕнтĕ тӳс», — тесе кăшкăрса ятăм, ăна хӳтерме пуçларăм. Вăл чикĕм-чакăм туса вĕçме пуçларĕ, унтан вара çĕр çумĕпе вĕçсе кайрĕ. Капла тунипе вăл мана улталаспăн пулнă. Анчах эпĕ вĕсен пиклĕ хăтланăвĕсене лайăх пĕлсе çитнĕ, ку фокуса та аванах тавçăратăп. Нумай та шухăшласа тăмарăм, ун патне кайма хатĕрлентĕм. Вăл çӳлелле хăпарма тапратсанах, эпĕ ун çинелле вирхĕнтĕм.

Фашист бомбардировщикĕ, ниçта кайса кĕреймен пирки, унталла-кунталла мĕнле пăркаланнине Михаил Жуков аллипе туса кăтартнă.

— Хуса çитрĕм те ăна, тӳрех вутхĕмпе вĕтĕнтертĕм, манăн малтанхи пульăсемех противник çине, гитлерла тискер ирĕрсем çине, пыра-пыра перĕнчĕç. Бомбардировщика çулăм хыпса илчĕ, вăл пушар пек мăкăрланма тапратрĕ. Вăл аяккинелле чӳхенкелерĕ, ӳкме пуçларĕ, тепĕр пĕр-ик минутăранах шыв çине персе те анчĕ.

Кĕçĕн лейтенант Михаил Жуков кашни кунах вĕçет. Вăл хăйĕн самолетне тăшман çинелле хăюллăн тытать, вăрçа паттăррăн кĕрет. Фашистсен ултă самолетне хирĕç Жуков сывлăша пĕр пĕччен хăпарни те пулнă. Вăл хăюллăн пырса хĕсни, тĕл пени тăшмансене шиклентернĕ, фашист летчикĕсем çапăçмасăрах каялла çавăрăнса тарнă.

Михаил Жуков отечественнăй вăрçăн чи малтанхи геройĕсенчен пĕри. Эпир унпа пĕрле ешĕл айлăмра ларатпăр. Вăл пурте тимлĕн итлесе ларнинчен тĕлĕнет. М. П. Жукова тата унăн икĕ боевой юлташне Совет Союз Геройĕн ятне парасси çинчен каларнă Указа вулакан дикторăн уçă сассине хăватлă репродуктор пур еннелле те сапаласан, вăл пушшех хумханса тĕлĕнет.

— Анне те итлет пулĕ ĕнтĕ кăна,—тет Жуков.—Вăл Вологда облаçĕнчи Череповецра пурăнать. Анна Тимофеевна... Айăплă эпĕ анне умĕнче, ăна хам çинчен ниепле те çырса пĕлтерйместĕп. Тăшмансене хирĕç эпĕ епле çапăçни çинчен, малашне те вĕсене хирĕç хăюллăн çапăçасси çинчен çырса пĕлтерĕр ăна.

Эпир Михаил Жукова аэродром çине ăсататпăр. Çул çинче вăл хăйĕн çичĕ тăванĕ çинчен, вĕсем халĕ пурте отечественнăй вăрçăн участникĕсем пулни çинчен каласа парать.

— Аннепе пĕрле пĕр йăмăк Дуся çеç юлнă, вăл та медицина сестри пулса фронта каять-ха иккен.

Михаил Жуков юлташĕсемпе сывпуллашать те хăйĕн боевой самолечĕ çине ларать. Мотора заводить тунă, машина аэродром çийĕн чупса каять.

— Ăнăçлăх сунатпăр! — кăшкăрса юлаççĕ юлташĕсем ун хыççăн.

Михаил Жукова пĕтĕм çĕршыв çĕнĕ ăнăçлăхсем, çĕнĕ çĕнтерӳсем сунать.

Гр. МИШУЛОВИН.
Действующи арми.

Охотник тăшман парашютисчĕсене пĕтерсе тăкнă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Фронт сывăхĕнчи пĕр ялхуçалăх артелĕнчи колхозник Киселев юлташ ирхине ирех охотăна тухса кайнă. Çул çинче ватă охотник сасартăках аялтан вĕçекен, фашистсен паллисемлĕ самолета курнă. Киселев юлташ пĕр пысăк мар уçланкă тĕлĕнче тăшманăн çавăрăнакан машинине сăнама пуçланă. Охотник уçланкă патне чупса пынă, пăталне пынă çĕртех авăрланă. Чĕнмен хăнасене вăл, совет патриотне тивĕçлĕ пек кĕтсе илнĕ. Тӳрех хирĕç персе, вăл фашистсен пĕр йĕкĕтне вĕлернĕ, иккĕмĕшне йывăр аматнă. Виççĕмĕшĕн ирĕксĕрех парăнмалла пулнă.

Хăюллă истребитель

Горизонт хăвăрттăн çуталать. Самолет патĕнче тата унăн сарлака çунатти айĕнче, сывлăмлă, чĕрĕ курăк çинче летчик-истребительсем лараççĕ. Вĕсем боевой сигнал кĕтеççĕ. Приказăн кашни сăмахĕ—вĕсемшĕн пурнăç, çĕнтерӳ. Сигнальнăй ракета пулсанах, хăюллă та паттăр истребительсем, тăвăллă çилпе çĕкленсе тăнă пек, сывлăша çĕкленсе хăпараççĕ, тăшман çине—вăрçăна кĕрсе каяççĕ.

...Летчик истребитель лейтенант Александр Петрович Подкрятов темиçе кун каялла хăйĕн чаçĕнче çеç паллă пулнă. Пултарулла, паттăр летчик вăл. Мирлĕ вăхăтра вăл сывлăпра тĕрлĕ фигурăсем туса хăйĕн юлташĕсене тĕлĕнтернĕ. Ăна унăн хăйĕн командирĕсемпе юлташĕсем мухтанă.

Подкрятов хăйсен чаçĕнчи отличниксенчен пĕри шутланнă. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех вăл тăван çĕршывăн паттăррăн çапăçакан герой пулса тăнă, унăн хиселĕ ятне халь пĕтĕм фронт пĕлет.

Сывлăша сигнальнăй ракета вĕçсе хăпарнă. Ыттисем вăранса кăвайте сӳнтерме тĕлĕкĕреймен, Подкрятов самолечĕ пĕлĕте çĕкленнĕ. Симĕс те ешĕл, сарлака уйхирсем инçете тăрса юлнă, часах вăл кăвак тӳпере курăнми пулнă.

Вăхăт сисĕнмесĕр шунă. Сехет иртнĕ. Хăюллă истребительсем сывлăша пĕрин хыççăн тепри хăпарнă. Таçта, инçетре вăрçă пынă. Летчиксем каллех тавăрăннă, вĕсем каллех хăйсем вырăнне—çĕр çине анса ларнă, хăйсен самолечĕсене тепĕр хут тĕрĕсленĕ, сывлăпра тăшмансене хирĕç çапăçни çинчен пĕр-пĕрне савăнăçлăн каласа панă.

Подкрятов çаплах тавăрăнман. Тĕттĕм пулнă. Нумай летчиксем, çĕр çине ăмăрт хăйăк пек мăнаçлăн вĕçсе анса, пĕр-пĕринчен хумхануллăн ыйтса пĕлнĕ:

— Подкрятов тавăрăнчĕ-и?

— Çук.

Летчиксенчен кашниех, Подкрятов çинчен хăй ăшĕнче шуралса, фашистла хура çăхансене уншăн тивĕçлипе тавăрма ĕмĕтленнĕ.

Кун иртнĕ. Каллех каç пулнă. Самолетсем каллех вăрçă хирне хăюллăн вĕçсе кайнă, каллех каялла тавăрăннă.

...Сисмен те, халь кăна вĕçсе килнĕ самолетсенчен пĕринче лейтенант Александр Подкрятов курăннă, вăл ешĕл курăк çине сиксе аннă. Летчиксем хавасланнă, вĕсем хăйсен сывăх тусне ыталаса илнĕ, унăн аллине хыттăн юратса чăмăртанă, ăнăçлă çĕнтерӳ тунăшăн сывлăх суннă.

Подкрятов сывлăпра хăй мĕн туни çинчен юлташĕсене кĕскен каласа панă.

Çак хăюллă истребитель иртнĕ пĕркун хушшинче тĕлĕнмелле приключенисем курнă.

Аэродромран вĕçсе тухса вăл тăшманăн икĕ истребительне тĕл пулнă. Сывлăшри çапăçу противник территорийĕ çинче пулнă. Ĕмĕтсĕр икĕ çăхан совет летчикĕ çине тискеррĕн тапăннă.

Тăшман пулемечĕн тискер пульлисем пирĕн самолетăн фюзеляжĕ çине пырса çапăннă. Подкрятов самолечĕ темиçе минута хушшинче шăтса пĕтнĕ. Мотор сасси, пăшал пени, пропеллерсем йăлтăртатса курăнни—пурте пĕр çĕре хутшăннă. Вăхăт иртнĕ, вăхăт сисĕнмен. Подкрятов хăйĕн самолетне хăюллăн тытнă. Юлашкинчен вăл тăшман истребителĕн хӳри вĕçне пынă. Ун çине вăл çулăм кинжалĕпе чикнĕ. Фашист истребителĕ сасартăках хăрах айăк çине çавăрăнса ӳкнĕ, çав самантрах пĕр выранта темиçе хут çавăрăнса илсе, çĕр çине чул пек йывăррăн персе аннă.

Çак тĕлĕнмелле хăрушă минута вăхăтĕнче Подкрятов хăйĕн самолечĕ ăна итлеменнине сиснĕ, вăхăта сая ямасăр посадка çине каймаллине туйнă.

Подкрятов хăйĕн паттăр туйăмне нимĕн чухлĕ те çухатман. Вăл ирĕр фашистăн иккĕмĕш самолечĕ çинелле хăвăрттăн вĕçсе хăпарнă, ăяккинелле тарма пуçланă.

Тăшманăн иккĕмĕш самолечĕ тарнă. Подкрятов аялалла аннă, вăл хăйĕн самолетне антарса лартма вырăн шыранă. Мĕн тумалла-ши? Вăл анас тенĕ вырăн противник территорийĕнче пулнă. Анчах, нумай шухăшлама вăхăт пулман, герой самолечĕ ирĕксĕрех çĕр çинелле туртăннă. Сисмен хушăрах Подкрятов пĕр темĕнле пушă аэродром курнă, унта пĕр самолет та, пĕр çын та пулман. Вăл часах тавçăрса илнĕ: ку тăшман аэродромĕ, противник отрячĕ урăх аэродром çине куçнă. Подкрятов çакă пушă аэродром çине анма шутланă. Аннă. Вăл, пĕр секунда сая ямасăр аэродром çинчи ешĕл курăка алăпа татса, хăйĕн машинине маскировать тунă.

Тĕттĕм тӳлеккĕн кăвакарнă. Каç пулнă. Подкрятов хăйĕн самолетне хыпăнсах ремонтланă. Тул çутăлнă вăхăтра вăл ирхи кăвак тĕтре ăшне каллех хăюллăн вĕçсе хăпарнă, хамăран аэродром çине чиперех тавăрăннă. Юлташĕсем ăна хаваслăн, хĕпĕртесе кĕтсе илнĕ.

Подкрятов хăйĕн приключенийĕ çинчен калама та ĕлкĕреймен... тăшман самолечĕ кăвак тӳпере çăхан пек явăнса вĕçнĕ. Вăл пит шăппăн, вăрттăн сасăпа кĕрленĕ, совет аэродромĕсене тата пирĕн çĕршывăн ешĕл тавралăхне сăнанă.

— Командир юлташ, ирĕк парăр мана!—тенĕ вăл, хăйĕн сăмахне каласа пĕтермесĕрех таçта хыпăнса,—ирĕк парăр çӳле хăпармашкăн!

— Юрать, яра пар!—ответленĕ командир.

Самолет çунатти айĕнче ешĕл курăк хумханса юлнă, Подкрятов кăвак тӳпене çиçĕм пек вĕçсе хăпарса, тăшман самолетне пӳлсе илнĕ.

Кăн-кăвак тӳпе. Сĕт пек шурă тĕтре айĕнче икĕ самолет хура пăнчă пек çеç палăрса курăннă. Пулеметран пени сасартăк янраса кайнă. Тăшман самолечĕ айккинелле сиксе ӳкнĕ, çав вăхăтрах вăл çĕр çине хăвăрттăн персе аннă.

Совет правительстви халь отечественнăй вăрçăн пирвайхи геройĕсене наградăларĕ. Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче хăюллăхпа хастарлăх кăтартнă паттăр боецсене наградăласси çинчен СССР Верховный Совет Президиумĕ каларнă Указра эпир летчик лейтенант Александр Петрович Подкрятов ятне те хĕпĕртесе вулатпăр.

М. РОЗЕНФЕЛЬД.
Действующи арми.

Антоненкопа Бринькон авиацири çĕнтерĕвĕсем

Крепость çинче хĕрлĕ ялав çĕнтерӳллĕн вĕлкĕшсе тăрать. Нимĕç бандичĕсемпе вĕсен тарçисем—белофинсем совет крепосĕн укрепленийĕсене сывлăшран, çĕр çинчен тата тинĕсрен пĕр хут çеç мар атакăлама хăтланнă. Анчах та вĕсен мĕнпур хăтланăвĕсем намăслăн арканса кайнă. Крепость гранитлă чулту пекех, çирĕппĕн, шанчăклăн тăрать.

Моряксем, сталинла соколсемпе пĕрле, тăшмана аркатса тăкмаллах çапаççĕ, ăна татăклăн та хăюллăн çĕмĕреççĕ. Хăюллă та паттăр моряксемпе летчиксем хушшинче уйрăмăнах летчик А. К. Антоненко паллă пулса тăрать тата пысăк авторитетпа усă курать. Ун çинчен, хăюллă, хăрама пĕлмен çын çинчен, тивĕçлипех мухтаса каласаççĕ.

Отечественнăй вăрçă пуçлансан Антоненко пĕр канмасăр тенĕ пекех хăйĕн боевой машини патĕнче дежурствăра тăнă. Кăшт сигнал пулсанах — унăн истребителĕ сывлăшра. Вăл çавтери çулте, пĕлĕт хушшинче вĕçсе, балтиецсене тивĕçлĕ мĕнпур хастарлăхпа сывлăшри пиратсене атакăлать.

Нумаях пулмасть крепость тĕлĕнче сывлăшра çапăçу пулса иртнĕ. Фашистсен икĕ истребителĕ пĕлĕтсем хушшинчен тухнă та тӳрех совет территорийĕ çинелле çул тытнă. Капитан Антоненко сывлăшалла çиçĕм пек хăвăрт чăмнă, пĕччен иккĕне хирĕç çапăçăва кĕрсе кайнă. Çапăçу пĕртан мар, татăклă тытăçу. Унта хăюллă, паттăр, пултарулла çын çеç, хăвăрт çавăрăнкалама пĕлекен тата шиксĕр çын çеç çĕнтерме пултарать.

Сывлăшра çапăçу темиçе минутăна пынă. Пĕрремĕш черет хыççăнах фашистла стервятниксенчен пĕри тарма пуçланă. Иккĕмĕшне Антоненко пĕлĕтре хыçалтан та çӳлтен те ниçта кайса кĕмелле мар хăвалама тытăннă, фашиста тăхланпа шăварнă.

Юлашкинчен, ниçта кайса кĕме çуккине кура, фашист çилленсе кайса Антоненко самолетне хăйĕн самолечĕпе пырса çапма шутланă. Антоненко тăшман шухăшне туйса илнĕ. Тĕлĕнмелле çавăрăçулăхпа, маневр туса, вăл, фашист çинелле татах та татах черетсем кăлара-кăлара ярса, таранран пăрăннă. Акă тăшман самолетĕнчен тĕтĕм мăкăрланма пуçланă, çулăм курăннă, вăл, çавăрăнкаласа, чăнкă чулту çине персе аннă.

Пĕррехине, командовани заданине пурнăçа кĕртес шутпа, Антоненко юлташ истребительсен группинче противник тылне тухса кайнă. Çул çинче унăн хăйпе пĕрле пыракан самолетсенчен юлмалла пулнă. Çакăнпа усă курса, унăн çине фашистсен 25 истребителĕ пырса тапăннă. Пит пĕлсе маневрсем туса, тăшман çине чăтмалла мар вăйлăн персе тăрса, Антоненко юлташ тăшман хупăрласа илнинчен çăлăнса тухнă та хăйĕн юлташĕсене хăваласа çитнĕ.

* * *

Петр Антонович Бринько командованипе хăйĕн боевой юлташĕсем умĕнче хăюллă, нимĕнрен те хăрама пĕлмен командир пулнипе палăрать. Финн белогвардейщинине хирĕç пынă çапăçусенче те вăл тĕлĕнмелле хăюллăхпа геройство кăтартнă. Унăн самолечĕ сывлăшра та, çăра вăрмансем çийĕнче те, метр хулăмĕш юр çуса лартнă çĕр çинче те тăшмана хыттăн çĕмĕрнĕ. Правительство Бринько юлташ тăван çĕршыв умĕнче тунă тава тивĕçлĕ ĕçсене пысăккăн хакларĕ, ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградланă.

Урса кайнă фашистла налетчиксене хирĕç пулнă пирвайхи çапăçусенчех сталинла сокол каллех тĕлĕнмелле героизм, тимĕр пек çирĕп те чăтăмлă пулнине кăтартса панă. Хаяр тăшмана хирĕç çапăçнă чухне Бринько юлташ фашистсен виçĕ самолетне пĕтерсе тăкнă. Вăйсем пĕртан мар чухне пулнă çапăçусенчен хастарлă герой кашнинчех çĕнтерсе тухса, хăйĕн базине чиперех тавăрăннă.

Действующи арми, июлĕн 14-мĕш.
(«Правда» сăмахĕсем).

Ёç фронтёнчи боецсем

Машинист-кривоносовец Семен Федорович Чупаев паровоз çинчен васкавлăн сиксе анчё те, депо картишнелле чупса кёчё.

— Анăçлах кайса килтём. Локомотив юсавлă. Авари таврашё тата техникăллă эксплоатаци йёркине пăсни пулман, — пёлтерчё вăл.

Унтан, мазутпа вараланнă аллисене шăлса тасатрё те, сылтăм аллине депо дежурнăйё Гусев еннелле тăсрё.

— Сывă-и?

Депо дежурнăйё Петр Михайлович алă тытнă май çапла ответлерё:

— Анăçлах кайса килнёшён эпё те сирёнпе пёрлех савăнатăп. Паян та хăвăрах каяс тетёр пулсан, сире куншăн ырланисёр пуçне нимён калама та пултараймастăп. Питех те лайăх пуçару...

Тепёр 5—6 сехетрен Семен Федорович хăйён экипажёпе пёрле лини çине тухнă.

— Гитлерăн урса кайнă бандисене çапса аркатиччен, ылханлă фашизма тёп тăвиччен, хамăн локомотив çинчен анмастăп. — Çапла шантарнă Чупаев депо начальникне Прокофьев юлташа, Сталин юлташ радио тăрăх сăмах тухса каланă хыççăн. — Халăхсен çулпуçё Сталин юлташ чёнсе каланине социализмлă тăван çёршывăн мёнпур вăя хурса ёçленипе, поездсене кривоносовла хăвăртлăхсемпе çуретнипе, революциллё сыхăлăха вăйлатнипе ответлетёп.

Вăл хăйён сăмахне тёрёс пурнăçласа пырать, пассажирски поездсене кривоносовла хăвăртлăхпа илсе çурет, ёçро Лунин меточёпе анлăн усă курать.

«Хамăран мёнпур ёçе фронт интересёсене пăхăнтаратпăр!» — çакнашкал лозунгпа ёçлет те ёнтё хальхи вăхăтра депо коллективё.

Çак кунсенче, пирён пётём халăх ылханлă фашизма хирёç отечественнăй аслă вăрçăна çёкленнё вăхăтра, депора производствăллă активлăх ÿссе пыни палăрать. Чапа тухнă паллă машинист Лунин меслечёсемпе ёçлесе, депори Терюкалов, Николаев, Воронцов, Сагитов тата ытти машинистсем куллен темиçешер центнер топливо перекетлеççё. Поездсене пысăк ăнăçлăхпа илсе çуреççё, пёчёк ремонтсене çул çинчех тăваççё.

Депо коллективё июньри плана пур енёпе те иртерсе тултарнă. Кăмрăк тата горючи чылай перекетленё.

Паровозсем юсакан комплекслă бригадăсенчи токарьсемпе слесарьсем хушшинче стахановла движени анлăн сарăлнă. Вăрçă пуçланнăранпа Золотухин, Андреев, Абросимов, Копочкин слесарьсем, токарь Тарасов ёç нормине кулленех 150—200 процентран кая мар тултараççё. Нумай пулмасть Черкасов юлташ ертсе пыракан комплекслă бригада васкавлă задани илнё. Золотухин, Андреев тата Абросимов слесарьсем, вăл кунхинё 20 сехет ытла ёçленё пулсан та, заданине пурнăçламасăр мастерскойран тухман. Вёсем çав кунхи нормăна темиçе хут иртерсе тултарнă.

Депо начальникё Прокофьев юлташ çак бригадăнах икё локомотива юсама хушнă. Локомотивсене юсама норма тăрăх 28 сехет кирлё пулнă. Стахановецсем, чăн-чăн совет патриочёсем пек ёçлесе, фронта хăвăртрах çёнтерÿ тума пулăшас тесе, ку ёçе 12 сехетрех туса çитернё.

— Слесарьсемпе токарьсем кун пек хастарлă пулнинне астумастăп-ха эпё. Ёçлессе ытти чухне те начар ёçлемён, халё унтан темиçе хут лайăхрах ёçлеççё, — савăнăçлăн каласа парать мастер Лотошников юлташ.

Сталин юлташ революциллё сыхăлăха вăйлатма чёнсе каларё. Ку чёнёве депора ёçлекенсемпе служащисен, инженерно-технически работниксен арăмёсем ёçпе пурнăçласа пыраççё. Ольга Прокофьева юлташ пуçарнипе килхуçи хёрарăмёсенчен депори предприятине хуралласкан ирёклё дружина организацияленё. Дружинăра 44 хёрарăм. Вёсен хушшинче çамрăксем те, ватăсем те пур. Вёсем хăйсен предприятине кункаçах пысăк тимлёхпе сыхлаççё, чыслă вахтăра тăраççё.

— Манăн икё ывăл фронтра Гитлерăн урса кайнă бандине хирёç çапăçать. Халё, тăван çёршыв вăрçăллă положенире тăнă чухне, эпё те ватă тесе алла усса ларма пултараймастăп. Сырăр мана та ирёклё дружинăна, — тесе каларё Анна Дербенева юлташ. Унăн хёрё Ольга Дербенева, депора расценщица пулса ёçленёскер, производствăран уйăлмасăр машинист помощникё пулма вёреннё. Унпа пёрле ёçленё расценщица Антюшина юлташ халё икё сын ёçне пёчченех йёркеллё туса пырать. Килхуçи хёрарăмё Волкова юлташ подъемнăй кран çинче машинист помощникё, нарядчица пулса ёçленё Игнатьева юлташ — паровоз çинче машинист помощникё пулса ёçлеççё. Çавăн пекех, кирлё пулсан, килхуçи хёрарăмёсенчен чылайёшё кочегарсем, токарьсем, слесарьсем, строгальщиксем, телефонисткăсем, бухгалтерсемпе счетоводсем пулса ёçлеме пултараççё. Акă, Тарасова — токарь ёçне, Гупалова — строгальщица ёçне, 12 хёрарăм кочегарсен ёçне пёлеççё. Вёсене мирлё пурнăçпа пурăннă вăхăтрах вёрентсе хатёрленё.

Кунсăр пуçне килхуçи хёрарăмёсем ГСО тата ПВХО кружокёсене йышлăн çÿреççё. Занятисем кашни кулленех йёркеллён пулса иртеççё. Çак кунсенче РОКК членне çёнёрен татах 28 хёрарăм кёнё.

— Эпир хамăр ёçпе Хёрлё Çара фронтра çёнтерÿ тума пулăшатпăр, — тесçё килхуçи хёрарăмёсем.

Канаш хули. П. НИКОЛАЕВ.

Вёренекенсем çум çумланă çёрте

ЭЛЁК. Зоя Леонтьева Куракăшри пуçламёш шкултан вёренсе тухнă. Пиччесемпе аттесем Германи фашизмне хирёç кёрешнё чух унăн та килте лăрас килмест. Вăл инкёшпе пёрле колхоз пахчинче ёçлет, çум çумлать.

— Манăн пит çум çумлас килет, — тесе каласа парать вăл,—çум вăл пахча-çимёссене ÿсме кансёрлет, вёсен тухăçлăхне чакарать. Çум çумлатпăр, пахча-çимёссем ытларах туса илетпёр, унпа эпир Хёрлё Çара пулăшатпăр.

Ефремкассинчи «1 Мая» колхозра шкул ачисем çăмăл ёçсене пурне те хăйсемех тума тăрăшаççё.

Антонина тата Анофий Пыркинсем Юманлăхри туллимар вăтам шкулта 5—6-мёш классене вёреннё, вёсем маллалли классене куçнă. Халё ку ачасем каникулта. Паян вёсем амăшёпе пёрле колхоз пахчинче çум çумлаççё.

Аркадий Корнилов, Мария Петрова, Нина Сорокина—вёсем пурте туллимар вăтам шкулта вёренеççё. Халё вёсем ушкăнпа пёрле пăрçа çинчи çумкуръăксене çумлама тухнă. Ив. МОСЕЕВ.

Колхоз çыннисем

ЕЛЧЁК. Патрекелёнчи «Осоавиахим» колхоз—районра малта пыракан колхоз шутланать. Вăл пуян колхоз. Патрекел ялёнчен икё километрта колхоз сачё ÿсет. Нумай çулсем хушши нимён усă та памасăр, армути, пиçен тата ытти çумкуръăксем пусса илнё çёр участкоё çинче колхозниксем хăйчетме, çырла-çимёссене туса илме тытăннă. Пахча ёçне пуçарса ярахансем Левый, Иванов юлташсем пулнă. Сад вырăнё — 13 гектар йышăнать. Садра улмуççисемсёр пуçне арбуз, хурлăхан çырли, çёр çырли тата ытти çимёссем те туса илеççё. Иртнё çулта колхоз çимёссем сутса 74 пин тенкё тупăш илнё. Сад çулсерен çёршер пин тенкё тупăш пама пуçларё.

Халё «Осоавиахим» колхоз опычёпе районри ытти колхозсем те сад ёрчетме, çырла-çимёссене туса илме тытăнчёç. «Осоавиахим» колхоз ытти колхозсене хăйён питомникёнчен çимёç йывăççисем парать, тёрлёрен пахча-çимёç вăрлăхёсене сутать. Кёркуннепе çуркунне сыпса ÿстернё улмуççисене те чылай сутать. Кашни ёçён хăйён мастерёсем пур. Колхозра сад ёçне пёлекенсен йышё ÿссех пырать. Колхозник Ф. Иванов юлташ сад ёрчетес ёçре 5 çул хушши ёçленё. Халё вăл ялсовет председателё.

«Осоавиахим» колхоз пёр пахча-çимёç ёçне кăна мар çирёплетсе пырать. Тёштырă енёпе тунă çитёнÿсемшён те колхоз икё çул хушши Пётём Союзри ялхуçалăх выставкин участникё пулчё. Кăçал та ялхуçалăх выставкин участникё. Иртнё çулта колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 17,75 центнер тёштырă пухса илчё. Уйăм бригадăсем тата ытларах илчёç. Виççёмёш бригадири Абрамов ертсе пыракан иккёмёш звено 35,86 гектар çинчен 760 центнер тёштырă пухса илнё.

«Пирён социализмлă промышленность вăйлăн аталанса пынă май, çёршыва сÿс нумай кирлё. Çавна шута илсе, техникăллă культурăсене ытларах акма тытăнтăмăр», тет Левый юлташ. Кăçал 20 гектар çине кантăр акнă. Звеносем кашни гектартан 9 центнер кантăр вăрри тата 8,5 центнер кантăр сÿсё илессишён ăмăртаççё, вёсем ăна пурнăçлаççё. Колхозра агротехникăна пурнăçа кёртсе пыраççё. Колхоз чылай паха опытсем илнё. Вăл опытсене пурнăçласа пыраççё.

«Осоавиахим» колхоз çуракине ăнăçлăн вёçлерё. Пурё 60 гектар çине тулă, 137 гектар çине сёлё акса хăварнă. Кăçалхи çураки—стахановла агротехникăллă çураки пулса тăчё. Мёнпур акнă вăрлăхран 90 процентне яровизацилесе тата пётёмпех сеялкăпа акса хăварчёç.

Колхоза коммунист Левый юлташ ертсе пырать. Вăл виçё çул хушши уйăç бригадин бригадирё пулса ёçленё. 1937 çултанпа пёр улшăнмасăр колхоз председателё пулса ёçлет.

Колхоз выльăх-чёрлёх ёрчетес тёлёшпе те пысăк çитёнÿсем тунă. Ёне, сурăх, сысна, чăх-чёп фермăсем организациленё. Колхозлă ялта чаплă çынсем нумай ÿссе çитёнеççё. Юлашки 5—6 çул хушшинче колхозниксем тёрлёрен профессисене вёренсе алла илчёç. Ку колхозран 28 учитель, 8 трактурист, 6 шофер, 4 комбайнер, 1 врач, 4 механик, 1 доцент, 3 инженер тухнă. Çак çынсемпе колхозниксем савăнаççё. Колхозниксем культурăллă пурнăçпа пурăнаççё. 37 киле радио кёртнё. Кашни колхозник килне хаçат-журналсем килсе тăраççё.

А. ДУДКИН.



Хёрлё Çарта. Тупăсем маршра
Д. Чернов фото-ÿкерчёкё (ТАСС).

Колхоз хёрёсен пултарулăхё

Хёрсем тени—Доронин ячёпе тăракан колхоз членёсемшён чи çывăх та кăмăллă ят. Аçта, мёнле ёçе тухан—унта хёрсем, пур çёрте те вёсем. Колхоз хёрёсем вăрман турттараççё, утă çуласçё, тырă вырасçё, комбайнпа ёçлесçё, фермăсенче чи лайăх работницăсем шутланаççё. Ёçе лайăх, хăвăрт тата пысăк пахалăхпа тăваççё.

— Пултараççё пирён хёрсем. Шăрçа карнă пек ретлё сухаларёç, пёр шăйрăк тата сухаламасăр пёр лаптăк çёр хăвармарёç, паллах, кăçал тырă ăнса пулать. Тырă тухăçлă пуласси — ёçе тёплён, агротехника мероприятийёсене çирёппён пăхăнса ёçленинчен нумай килет,—тет ватă колхозник Архипов çураки ёçёсене аса илсе.

Германи фашисчёсем Совет Союзё çине вăрă-хурахла тапăннине хирёçлесе пулнă митингра Ираида Григорьева юлташ çапла каларё:

— Иртёнсе кайнă фашистсем, тăнран тайăлнă Гитлер тата унăн йыттисем социализмлă тăван çёршыв çине тапăнчёç. Вёсем пирён мирлё хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахса телейлё те пуян пурнăçа туртса илме хапсаççё. Çук, апла пулмё! Пирён геройла Хёрлё Çар, Флот тата Авиаци тăшмана халиччен курман хăват кăтартрёç. Эпир тăван Хёрлё Çара колхоз производствинче тÿрё кăмăлпа ёçлесе пулăшăпăр.

Григорьева юлташран пример илсе А. Куполова, М. Демьянова стахановкăсем те жнейкăпа ёçлеме пуласçё.

Çакăн пек хăюллă та паттăр хёрсем колхозра татах та нумай. Акă, А. Сергеева, М. Кириллова, А. Прокопьева юлташсем колхоз производствинче тÿрё кăмăлпа ёçлеççё. Нихăçан та пёр ёçрен юлмаççё. Çавна пула вёсем кёске вăхăт хушшинче 150—200 ёçкунё ытла тума ёлкёрнё.

Колхозра кашни хёрача çёнё профессисем илме тăрăшать. Т. Ильина юлташ комбайнпа ёçлеме вёренсе кăçал ăнса пулнă тырра пуçтарса кёртме тимлён хатёрленчё. Унăн комбайнё юсавлă.

Тем тёрлё професси те пур хёрсен. Вёсем пур ёçре те пултараççё. 17 хёр—ПВХО инструкторёсем. Вёсем кашни бригадăра, звенора колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче «Сывлăпран тапăннинчен сыхланасси» темăсемпе калаçусем, тактикăллă занятисем ирттереççё.

Çакăн пек халь колхозпа ял хёрёсен шухăш-кăмăлёсем. Кашни хёрача тăван çёршывăн усăллă пуласшăн. Вёсем арçынсен профессине вёренеççё. Кирлё пулсан, вёсем пурте пёр çын пек пулса, алла хёçпăшал тытса çапăçăва тухма та хатёр.

П. ЧИЧКАНОВ.

Германи фашизмён тискер сăн-сăпачё

Фашистла Германия Советсен çёршывё çине ирсёррён, ултавлăн тапăнни çынвёлеренсемпе палачсен гитлерла банди çёнё, тёлёнмелле преступлени туни пулса тăрать.

«Çак вăрçа,—тесе каларё Молотов юлташ июнён 22-мёшёнче хăй радио тăрăх тухса каланă сăмахра,—Германи халăхё мар, Германири рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци мар илсе кёчёç,—вёсем асап тÿснине эпир лайăх ăнланатпăр,—çав вăрçа пире Германин юншăн çунакан фашистла правителёсен ушкăнё, французсене, чехсене, поляксене, сербсене, Норвегие, Бельгие, Дание, Голландие, Греците тата ытти халăхсене пусмăр айне тунă ушкăн илсе кёчё».

Гитлер, Геринг, Геббельс тата Германин фашистла ытти правителёсем Германи халăхён представителёсем пулса тăмаççё. Вёсем—Германи халăхён хаяр тăшманёсем, вăтам ёмёрти чи варварла методсенчен те иртсе кайса, Германи халăхне чуралăха кёртсе ÿкернё хаяр тăшмансем пулса тăраççё.

Кётессенче пытанса Германи халăхён чи лайăх представителёсене тискеррён вёлерни, демократиллё организацисен пуçлăхёсене варварла пётерсе тăкни, халăхăн чи кая юлнă сийёсем хушшинче юншăн çунас тата çынна курайманлăх чи тискер туйăм чёртсе яни, халăхсем хушшинче пёр-пёрин çине тăшманла пăхас тата раса тёлёшёнчен пёр-пёрне кăшлас шухăш-кăмăл сарни—акă мёнрен пуçланă хăйсен преступленийё ёçне нимёç фашисчёсем.

1933 çулта Германири власа туртса илсе, Гитлер тата ăна пулăшакансем мёнпур банди государствăн пётём аппаратне юнлă террор службине тăратнă. МОПР даннăйёсем тăрăх, Германире гитлерла режим туса хунă хыççăн иртнё пирвайхи икё çул хушшинчех, урăхла каласан, 1935 çулти январь уйăхёччен, фашистсене хирёç кёрешекен пиншер çынсене вёлернё е тата «тарма хăтланнă чух» тесе перçе вёлернё.

132 пин ытла çынна сусăрлантарса пётернё, пёр миллиона яхăн çынсене хыттăн хёненё, фашистсене хирёç кёрешекен çынсене, 400 пин çынна çити, концентрацийёлё лагерьсене е каторгăллă тёрмесене хупса лартнă.

Акă фашистсене хирёç кёрешнё ултă çынна асаплантарса вёлернё çёрте пулнă пёр ватă нимёç чиновникён отчечё. Çав çынсене 1933 çулти ноябрён 29-мёшёнче Кельн хулинчи Клингель-пюцк тёрминче вёлернё. Отчет авторё суд тунă виçё çыннăн пуçёсене мёнле касса илни çинчен кăтартса парса, çапла çырать: «Таваттăмёшне асаплантарса вёлерме тытăнсан, палач, хăйён коллегёсем пекех, самаях ёçсе супнипе пулас, вăйлăнах касаймарё. Пуртă суд тунă çыннăн пуç шăмми çине ларса юлчё. Пуртăпа иккёмёш хут каçни те ăнăçлă пулмарё, виççёмёш хут лартсан кăна çав телейсёр жертвăн кёлеткинчен пуç уйăрăлса ÿкрё...

Суд тунă пилёкмёш çынна вёлернё чухне те пёрремёш хутёнче палачăн ёç тухмарё, пуртăпа иккёмёш хут лартсан кăна çыннăн пуçне татса ывăтрё. Суд тунă улттăмёш çыннин—рабочи Иосиф Энгельсăн пуçне пуртăпа хăрушлăн пёрре лартнипех касса татнă. Çав ултă рабочине массăллăн асаплантарса вёлерни эпё хамăн служба вăхăтёнче курнă хăрушă ёçсенчен чи хăрушши пулса тăрать».

Протоколсемпе ытти документсенче фашистла бандитсем çынсене çавтери хăрушă та тискер майсемпе асаплантарса вёлернисене кăтартакан фактсем темён чухлех. Акă документсенчен пёринче Дахаури концентрацийёлё лагерьте ландаг депутачёсене Дрессельпе Геца вёлернине кăтартса панă:

«Депутат Дресселе мён виличченех тискеррён асаплантарнă. Урса кайнă фашистсем ăна тёрме камеринчи урай хăми çине кёпе-йёмсёрех, çараллах пăрахнă, ăна тёлёнмелле хыттăн хёнесе пётернё, унăн пётём кёлетки кăвакарса çёрсе ларнă, юнпа вараланнă, ăна йăлтах амантса пётернё. Унăн пÿрнисем, вăйлăн хёненипе, 10 сантиметр хулăмёш тăртанса ларнă, ури-аллисем нимён йёркесёр тăртанса кайса темскер тултарнă михё пек пулса ларнă. Вилё кёлеткине аялалла туса пăрахнă, пёр аллине каялла пăрса лартнă, артерине касса татнă, кунсăр пуçне, аллисенчен виçё кётеслё туса аш татăкёсене касса илнё. Вилнё çын кёлеткипе юнашар çёçё выртнă, ăна çав çын хăйне хăех вёлернё, тесе кăтартас шутпа хунă. Дресселе вёлернё хыççăн, штурмовиксем юрлама, выляма тата савăнма тытăннă...

Гец, хăй виличчен темиçе эрне малтанах, хăрушла асаплантарнипе, пачах илтми пулнă. Апла пулсан та фашистсем ăна кашни кунах хёненё, юлашкинчен вара Дресселе вёлернипе пёр вăхăтрах перçе пăрахнă».

Фашистла изуверсем вёсен юнлă урисем айне лекнисене пурне те тискеррён асаплантарса е хёнесе вёлереççё. Гестапо (фашистла охранка) çурчёсенче, СС охрăна отрячёсен çурчёсенче мёнле хăрушла ёçсем пулса иртни çинчен пётёмёшпе çырса кăтартма та май çук. Кепенике хулинчи хёрарăмсен социал-демократла организацийён руководительницинчен Янковскаяран 1933 çулти мартăн 20-мёшёнче мёнле мăшкăллани çинчен кăтартса паракан отчетра çапла каланă: «Пÿлёмре сётел тăнă, ун çине хурахёрлё пусма витнё. Янковскаяна сётел çине выртма хушнă, ун хыççăн ăна 20 хутчен патакпа çапнă. Çакăн хыççăн ăна темиçе ыйту панă. Штурмовиксен кăмăлне кайман кашни ответ хыççăнах патакпа çапнă... Ăна юман патакпа сахалтан та 120 хутчен çапнă. Янковскаян кёлетки çинче çапса хёненё вырăнсене врач тупса палăртнă, унăн пётём кёлеткине амантса пётернё; кунсăр пуçне, пит-куçне пысăккăн амантнине палăртнă. Тепёр икё кунран Янковская вилнё: кёлеткине касса пăхсан çакă курăннă: Янковскаян, хёненине пула, пёверё суранланнă тата хăмпăвё пăсăлнă пулнă».

Берлинăн çурçёр районёнче Витлерăн çăкăр пёçерекен заводёнче 21 çулти Ц. возчика арестленё. Кайрантарахпа ăна хёнесе асаплантарнине курнă пёр çын хăй ёçленё çёрте çапла каласа панă:

«Ц-на хăйён чăпăркипех хёненё, хёненё чухне чăпăрккă татăлса пётнё. Çакăн хыççăн Ц-на хăйён юнёпе вараланнă урай хăмине çуллама хушнă. Унăн чёлхине супăнь сёрсе щеткăпа якатнă. Ун хыççăн ăна урари атăсене хывтарнă та подметкăсене çуллама хушнă. Çакăнта пулнă хăшпёр штурмовиксем: «Эсё, каналья, Гитлер çёрё çинче утса çÿретён, эсё ун çинче утса çÿреме тивёçлё мар», тесе вăрçнă.

Фашистсем хăйсен жертвисем—еврейсем тёлёшпе тăвакан тискер те хăрушă ёçсем пуриншён те паллă. Германин Парижри посольстви çине тапăннă пирки 1938 çулти кёркунне организациленё тискер погромсем пётём тёнчене тарăхтарса янă. Çёршер пин еврейсене хăйсен хваттерёсенчен хăваласа кăларса янă, еврейсен хваттерёсене вёçёмсёр нумай вут тёртсе çунтарнă, вёсене тискеррён хёненё тата асаплантарнă. Англири «Ньюс кроникл» хаçат 1938 çулти ноябрён 23-мёшёнче статья пичетлесе кăларнă, унта 1938 çулти ноябрён 11-мёшёнче Саксенгаузенри концентрацийёлё лагере 62 еврей-заложника илсе пынине курнă çын пёлтерни çинчен çырнă.

«Еврейсене,—тесе каланă çав пёлтерÿре,—штурмовиксен стройё витёр утса тухма хушнă. Штурмовиксем патне çывхарсанах, вёсене пурте пёр харăс хыттăн хёнеме пуçланă. Чăтма çук хыттăн асаплантарнипе çынсем кăшкăрма тытăннă, полицейскисем вёсен сассинчен хăранипе аяккалла пăрăннă. Хёненисем пурте урайне ÿксен те, вёсене çав-çавах хёненё. Çак хăрушă ёç çур сехете пынă. Кун хыççăн тёрмере лараканн ытти çынсене хёненисене аяккалла илме хушнă. 62 çынран 12-шё вилнё пулнă, вёсен пуçёсене йăлтах ватса пётернё. Пичёсенчен пăхсан вёсене палласа та илмелле мар пулнă, мёншён тесен пётёмёшпех татăкласа пётернё.

Кунта Германи фашисчёсем хăйсен жертвисем тёлёшпе тăвакан нихăçан курман-илтменле хăрушă та тискер ёçсем çинчен калакан фактсенчен уйăм примерсене çеç илсе кăтартнă. Германи фашисчёсем хăйсен халăхён юнё çинче утса çÿреççё.

1939 çулти кёркунне империализмлă иккёмёш вăрçă пуçланнă хыççăн тискер террор мёнле вăйланса кайнине пёлме йывăр мар. Фашистсен хăйсен хаçачёсемех — «Гамбургер фремденблатт» тата «Фелькишер беобахтер» хаçатсен туллимар даннăйсем тăрăх, пёр уйăх хушшинче кăна—1941 çулти майăн 15-мёшёнчен пуçласа июнён 15-мёшне çитиччен—Германире 51 çынна асаплантарса вёлернё. Хальхи вăхăтра уйăмăнах тытăкăна лекнё çар çыннисем çине мён чухлё те пулин этемле пăхакан кашни çыннах мёнпур хаяр-лăхпа тытăкаласçё. «Вестфалише ландесцейтунг» хаçат 1941 çулти июнён 15-мёшёнче çапла пёлтернё: П. Шмитт текен пёр çынна «тытăкăна лекнё çар çыннисемпе калаçнăшăнах» перçе вёлернё.

Çакнашкал ёнтё фашистла палачсемпе çынвёлеренсен тискер сăн-сăпачё, çакнашкал ёнтё хăйсем Германири тата Европăри пусмăра кёрсе ÿкнё халăхсем тёлёшпе пуçпулма хăтланакан фашистла палачсемпе çынвёлеренсен тискер майёсемпе меточёсем.

К. ЛОРИН.

Колхозсемпе предприятисем Сталин юлташ чёнсе каланине ёçпе пурнăçлаççё

ÇЕМЁРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Çак кунсенче древкомбинатра партипе хуçалăх активён канашлăвё пулса иртрё. Канашлу комбинатăн çурçулти ёçёсемпе умра тăракан задачисем çинчен сÿтсе-явкё. Ку ыйту тăрăх комбинат директорё Егоров юлташ доклад туса пачё.

Комбинат коллективё иртнё ултă уйăх планне ытлашшипех тултарнă. Ёç тухăçлăхне хăпартас, продукцин хăйне ларакан хакне чакарас тёлёшпе уйăм цехсем питех те паха результатсем катартрёç. Цехсенче уйрăмăнах XVIII партконференци хыççăн çирёп йёрке, тасалăх, культурăллă сăнлăх туни курăнать.

— Правительство мён чухлё продукци туса кăларма хушать, çавăн чухлё кăлармалла. Эпир туса кăларнă продукци Хёрлё Çара фронтра çёнё çёнтерÿсем тума пулăшать. Эпир партипе правительство ыйтнине пурне те ăнăçлăн, пысăк пахалăхпа пурнăçлама хатёр, — терё Егоров юлташ.

Пренире тухса калакансем комбината охрана ёçне лайăхлатмалли çинчен, кашни рабочин, работницăн большевикла сисёмлёхе вăйлатмалли çинчен чарăнса тăчёç.

Канашлу, пурте пёр саслă пулса, Сталин юлташ пётём ёççыннисене чёнсе каланине тÿррён пурнăçа кёртсе пыма сăмах пачё.

* * *

ÇЁРПУ. («Чăваш Коммуни» корр.). ВКП(б) райкомёпе райсовет исполкомё ялсоветсемпе колхоз председателёсен канашлăвне туса ирттерчёç. Канашлу Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмахне пурнăçласа пырасси çинчен сÿтсе-явкё.

Ку ыйту тăрăх райсовет исполкомён председателё Петров юлташ доклад туса пачё. Петров юлташ хăйён докладёнче мирлё вăхăтри шухăш-кăмăлсене пăрахса, хамăр ёçе вăрçă вăхăтёнчи пек урăхлатса çёнетесси çинчен каларё.

Канашлу, пурте пёр саслă пулса, тыла çирёплетсе пыма, фашистла бандитсене çапса аркатма Хёрлё Çарпа Тинёс-Çар Флотне тата Авиацине пулăшса пыма, тырпула кёске вăхăтра пёр тăкаксăр пухса кёртме, государство умёнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлама, общественăллă пурлăха лайăх сыхлама пулчё

Преподавательсемпе студентсем колхозсене ёçлеме каяççё

Гитлерăн фашистла банди социализмлă тăван çёршыв çине тапăннă вăхăтра кашни ёççынни лайăхрах ёçлеме, çёршыв оборонине çирёплетме, тăван Хёрлё Çара пулăшса пыма тăрăшать. Чăвашсен ялхуçалăх институтёнчи, колхоз техникумёнчи преподавательсемпе научнăй работниксем тата студентсем çуллахи каникул вăхăтёнче колхозсене вăйлă тырпулсене пухса кёрес ёçре пулăшма кăмăл турёç. Чылай преподавательсемпе студентсем вырăнсене тухса кайма документсем илчёç. Хăшпёр юлташсем ёçлеме тытăнчёç те. Выльăх апат-çимёç кафедрин заведующийё доцент И. Рыжов Сёнтёр райçёрёç пайён зоотехникё пулса, ялхуçалăхёнчи ÿсен-тăрансене сиен кÿрекенсенчен сыхлас ёç кафедрин заведующийё доцент Н. Тураев пурçăн хурчёсем ёрчетес тёлёшпе ёçлекен колхозсене пулăшас енёпе ёçлет. Колхоз техникумён преподавательници Бережная юлташ Шупашкар районёнчи пёр колхозра зоотехник пулса ёçлет. Ялхуçалăх институчён студенчё А. Ерлаков юлташ Хёрлё Чутай МТ Станцинче ёçлеме тухса кайрё. Студент П. Зорин юлташ Куславкка райçёрёç пайён зоотехникё, Кузьмин Октябрьски райçёрёç пайён зоотехникё пулса ёçлеççё.

Ялхуçалăх институтёнче халь комбайнсемпе тракторсем çинче ёçлекенсене хатёрлемелли çирём кунлă курс организацияленё. Çав курсра пурё 43 студент тата Шупашкарти вăтам шкулсенчи аслă классенче вёренекенсем 18 çамрăк вёренеççё.

Н. КОНДАКОВ.
М. СМЕТАНИН.

* * *

Чăвашсен педагогика институтёнчи студентсем Шупашкарти предприятисемпе заводсене ёçлеме юлчёç.

— Çак хăрушă вăхăтра, Германи фашизмё пирён тăван çёршыв çине тискеррён килсе тапăннă вăхăтра, эпир хамăрăн каникул вăхăтне ирёкре çÿресе ирттерме пултараймастăпр,—теççё студентсем.

Чăваш чёлхипе литературин отделенинчи II курсра вёренекен комсомолка О. Александровăпа А. Александрова вёренÿ çулё вёçленнёренпех Шупашкарти пёр заводра ёçлеççё. Вёсем хăйсен нормине икшер хут тултарса пыраççё.

Институтри студентсенчен нумайёшё, курортсемпе санаторисене тата канмалли çуртсене кайма илнё путевкăсене профкома пырса парса, хăйсем канма кайма килёшменни çинчен пёлтереççё, хăйсене производствăна яма ыйтаççё.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 17-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Псков-Порхов енĕсенче çĕрĕпех хаяр çапăçусем пынă. Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче вăрçă ĕçĕсем пысăккăнах пулса пыман тата войскăсен положенинче ытлашши пысăк улшăнусемех пулман. Пирĕн авиаци июлĕн 17-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противникăн мотомехчаçĕсене хирĕç кĕрешнĕ тата аэродромсенче унăн авиацине пĕтере-пĕтере тăкнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç енче румынсемпе нимĕç войскисен группине çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, Румыни батальонĕ хăйĕн пĕтĕм составĕпех пирĕн енне каçнă та, парăнса тытăкана лекнĕ. Румынсемпе нимĕçсен офицерĕсене, Хĕрлĕ Çар енне каçассине хирĕç тăнăскерсене, салтаксем конвойпа илсе пынă. Салтаксем Совет командованине танксене хирĕç кĕрешмелли тупăсем виççĕ, 420 винтовка, 12 пулемет, нумай снарядсемпе патронсем, радиостанци, пилĕк автомашина тата 56 обоз тĕрĕссипех панă.

* * *

Н-ски енчи çапăçусем вăхăтĕнче советăн майор Разуваев ертсе пыракан танковăй батальонĕ çĕрле тăшман тылне пит шала кĕрсе кайнă. Совет танкисчĕсем пырса кĕнĕ пирки Германи войскисен тылĕнче пысăк паника пуçланса кайнă. Германи артиллерийĕ хăйсен танковăй чаçĕ çинех вăйлăн пеме пуçланă. Çак паника вăхăтĕнче Германин темиçе батарейи хушшинче артиллеристсем пĕр-пĕрне хирĕç вăйлăн персе тăнă, çакна пула орудисем тата артиллеристсем сахал мар стройран тухнă. Çĕрле тăшман çине флангран пырса тапăнса, майор Разуваев танкĕсем тăшман чаçĕсен пĕр пысăк штабне пĕтерсе тăкнă тата Германи чаçĕçем хушшинче пысăк участокра çыхăнăва çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Кĕçĕн лейтенантсем Поляковпа Пискарев летчиксем тăшман тылĕ витĕр тухнă. Командирсем нимĕçсем оккупациленĕ О. ятлă ял патне çитсен, вĕсем урамсемпе пӳртсем вырăнне сивĕнсе çитмен кĕл куписене курнă. Нимĕçсем пырса кĕриччен колхозниксем пурте ялтан тухса тарнă, нимĕн хăварманнине пĕтерсе тăкса вĕсем партизанла отрядсене кайнă. Лейтенантсем партизансен отрячĕн «Мучи» тесе чĕнекен хăюллă та паттăр командирĕ çинчен каласа кăтартнă. «Мучи» отрячĕ пĕтĕм округĕпех фашистсене çавтери хăратса сӳрет. Партизансем нимĕçсен çичĕ танкне пĕтерсе тăкнă, темĕн тăршшĕ хушăра телефонпа телеграф проводисене пĕтерсе хунă, тăшман мотоциклисчĕсен группине сыхласа илсе, ăна çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Балканри çĕршывсене оккупацилесе, гитлерла ирсĕрсем хăйсен питех те киревсĕр планне—Европăн çав пайĕнче пурăнакан славян халăхĕсене ерипенех вĕлерсе пĕтермелли планне пурнăçа кĕртме тытăннă.

Фашистла захватчиксем чуралăха кĕртсе ӳкернĕ славян халăхĕсенчен тĕрлĕ майпа мăшкăллаççĕ. Çак кунсенчех Белградра нимĕçсем урамсенче виççĕре яхăн серб хĕрĕсене тытса чарса, вĕсене салтаксен публичнăй çурчĕсене ăсатнă. Нимĕçле каласа килĕшменшĕн темиçе вуншар словенсене персе вĕлернĕ. Уйрăмăнах оккупантсем сербсен православнăй священникĕсене кураймаççĕ, мĕншĕн тесен çав священниксем халăха пусмăрçăсене отпор пама чĕнсе каласçĕ. Нумаях пулмасть хăйсен чиркĕвĕсем умĕнчи хунарсенчен виçĕ священника çакса вĕлернĕ. Фашистла влассем ĕненекенсене асаплантарса вĕлернĕ çынсен кĕлеткисене пытарма чарнă.

Югослави çĕрĕ çинче фашистла пусмăрçăсем туса пыракан çак мĕнпур тискер ĕçсем вĕсем — гитлерла ирсĕрсем славян халăхĕн чи усал тăшманĕсем пулнине çĕнĕрен ĕнентерсе параççĕ.

Гитлерла Германия Совет Союзĕ çине тапăннă хыççăн Польшăра партизансем нимĕç пусмăрçисене хирĕç активлăн кĕрешме пуçлани палăрать. «Союз борьбы за освобождение от гитлеровцев» текен организаци гестапо агентурине пысăк чăрмавсем кӳрет тата питех те канăçсăрлантарать. Юлашки вăхăтра каларнă воззванисенчен пĕринче союз çапла пĕлтерет: «Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă вĕсленмен-ха. Халĕ, Гитлер Совет Союзне хирĕç вăрçнă чухне, Польшăра оккупантсен положенийĕ халичен пулнинчен чылай йывăртарах. Кашниннех хăйне фронтри салтак пек туйса тăмалла, ăçта май килет — çавăнта тăшмана сиен кӳмелле, взрывсем тумалла, вут тĕртсе çунтармалла, оккупантсене пĕр хĕрхенмесĕр вĕлермелле. Тирансене хирĕç вĕсен хĕçпăшалĕсемпех çапăçмалла. Хĕçпăшалланнă кашни нимĕçех — вăл ирĕклĕхпе цивилизацин хаяр тăшманĕ. Нимĕçсене хирĕç мĕнпур средствăсемпе кĕрешмелле, хăйсен пурнăçĕшĕн вĕсем яланах шикленсе çӳреччĕр, гитлеровецсене яланах тата пур çĕрте те çапса çĕмĕрĕр».

* * *

Колхозлă хресченсем пысăк тухăçлă тырпула халиччен пулман хăвăртлăхсемпе пуха кĕртеççĕ тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене тултараççĕ. Çурçĕр-Осетин республикинчи Ардонски районра пур комбайнсем те талăкĕпех ĕçлеççĕ. «Труд Сталина» колхоз пучахлă тырăсене ултă кун хушшинче пĕтĕмĕшпех пуха кĕртнĕ. Çав районри Молотов ячĕпе тăракан колхоз тырпул тăратмалли плана пĕтĕмпех тата срокчен тултарнă. Запорожье облаçĕнчи Ново-Троицки районра тĕштырăсене пуха кĕртес ĕç вĕсленсе пырать. Колхозниксем хĕрлĕ обозсем массăллăн организацилеççĕ, государствăна тырпул срокчен параççĕ. Курск облаçĕнчи сахăр кăшманĕ акса тăвакан совхозсенче уйхир ĕçĕсене тума килхуçи хĕрарăмĕсем, студентсем, шкул ачисем çăршерĕн тухнă. Киров ячĕпе тăракан совхозра сахăр кăшманĕн плантацийĕсенче килхуçи хĕрарăмĕсем 250 çын ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕ нормăсене пĕрре çурă — икĕ хут иртерсе тултараççĕ. Плантацисенче кĕрхи тырă пиçет. Чечено-Ингуш республикинчи колхозсем государствăна тырпул 1940 çулти çав вăхăт тĕлне панинчен 3,5 хут нумайрах панă. Свердлов облаçĕнчи Егоркински районри колхозниксем иртнĕ çулти тырăран 1941 çуллăн аванс йĕркипе государствăна 2000 центнер панă. Рязань облаçĕнчи Бельковски районри колхозсем аш-какай памалли плана тултарнă хыççăн, Хĕрлĕ Çара парне парас шутпа планран ытлашши илмешкĕн хатĕрлев пункчĕсене вылăхсем тата сысна çурисем илсе пыраççĕ.

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани сăмах

ЛОНДОН, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи премьер-министрĕ Черчилль паян общинăсен палатинче сăмах тухса каланă, çав сăмахра вăл официальнăй йĕркепех çапла пĕлтернĕ: Российăпа Англия союзниксем пулса тăраççĕ, тенĕ.

Иртнĕ эрне вĕçĕ тĕлне, тенĕ Черчилль, пурне те хăратса тăракан тăшмана хирĕç пĕрле кĕрешесси çинчен Англипе Россия правительствисем хушшинче савăнăçлăн килĕшӳ тума май килчĕ, çав килĕшӳре Англипе вырăс халăхĕсем тата Англи доминионĕсем пĕтĕмĕшпех ырлаççĕ (алă çупаççĕ). Англи правительстви те, çавăн пекех Россия правительстви те гитлерла Германие хирĕç малалла вăрçма, пĕр-пĕрне пама май килекен мĕнпур пулăшусене пама тата сепаратлă мир тумасăр тытăнса тăма пулчĕç. Ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден тата пирĕн Мускаври посол сэр Стаффорд Криппс ĕçе хăвăрт вĕçлес тĕлĕппе ывăнма пĕлмесĕр тăрăшрĕç. Алă пусса çирĕплетнĕ тата текстне пичетлесе кăларнă çак килĕшӳ вăрçăн малашнехи аталанăвĕ çине питех те паха тата вăйлă влияни памасăр тăма пултарайманнине. Вăл, нимĕн иккĕленмелли те çук, союз пулса тăрать, халĕ ĕнтĕ вырăс халăхĕ пирĕн союзник пулса тăрать (алă çупаççĕ). Малалла Черчилль çапла каланă: эпĕ Кăнтăр Африка Союзĕн премьер-министрĕн Смэтс генералăн заявленине пĕтĕмĕшпех ырлатăп; Смэтс çапла каланă: эпир коммунистсемпе союз турăмăр тата коммунизмшăн кĕрешетпĕр тесе калама никам та пултараймасть. Нейтралитетшăн тăраканнисене вĕсем нацизмшăн кĕрешеççĕ тесе айăплани нумай тĕрĕсрех пулнă пулĕччĕ. Аслă çын пулма сĕмленекен Гитлер тапăнни пирки вырăссем хăйсене хӳтлес шутпа алла хĕçпăшал тытрĕç пулсан, эпир вырăс хĕçпăшалне çĕнтерӳ тума пиллетпĕр тата, коммунистла вĕрентӳ майлă пĕр минутăлăха та тăмастпăр пулсан та Российăна пур енчен те çитĕнӳсем тума сунатпăр.

Эпĕ иккĕленместĕп, тенĕ Черчилль, парламент членĕсем Сирирен килнĕ çĕнĕ паха хыпарсем çинчен пĕлеççĕ. Икĕ енĕ те кăмăллă пулса, унти вăрçă ĕçĕсене чарса лартасси çинчен килĕшӳ тунă. Çак килĕшӳ французсем хушшинчи, çавăн пекех французсемпе Англи, Австрали тата Инди салтакĕсем хушшинчи тăвана тăван вĕлермелли кĕрешĕве пĕтерчĕ. Çак хурлăхлă çапăçусен эрнинче, икĕ енĕн войскисем те çавтери дисциплинăллă, аста тата хăюллă пулнине кăтартнă эрнесенче, пирĕнпе Виши правительстви хушшинчи отношенисем начарланмарĕç, çакă вăл акă мĕне кăтартса парать: халĕ кĕрешӳ мĕншĕн пынине французсем лайăх ăнланаççĕ.

Эпир Сирире Англия лайăхрах положенире пултăр тесе тăрăшмастпăр. Çак çĕршыва оккупациленĕ чухне пирĕн пĕртен-пĕр тĕллев — нимĕçсене çапса çĕмĕресси тата вăрçăра çĕнтерӳ тума пулăшасси пулнă. Черчилль Сирири кампани ăнăçлăн вĕçленнĕ ятпа Уайвеллпа Вильсон генералсен тава тивĕçлĕ ĕçĕсене паллă тунă.

Нил айлăмĕнчи положени пирки Черчилль çапла каланă: хальхи вăхăт тĕлне унти ĕçсем, кирек мĕнле пулсан та, чылай лайăхланнă. Соллум патĕнчи хаяр, анчах та ĕçе татса паман çапăçусем, — унта Англин пушхирте кĕрешме вĕрентнĕ войскисем хутшăннă, —Крита çине тăрса хӳтлени, унти çапăçусенче противник авиацине пысăк çухатусем кӳни, — çаксем ĕнтĕ татăклă результатшăн хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăраççĕ.

Малалла премьер-министр çапла каланă: çак выступлени вăхăтĕнче эпĕ пирĕн войскăсемпе Сири хушшинче тунă килĕшӳ текстне вуласа пама шаннăччĕ, анчах та ăна татăклă формăпа çырса йĕркелемен-ха. Унта пысăк мар темиçе тӳрлетӳ кĕртнĕ, тенĕ вăл малалла, вăл тӳрлетӳсене йышăнă, анчах та правительство шучĕпе çав тӳрлетӳсем тĕпрен илсен мĕн кирлине йăлтах тивĕстереççĕ.

Çар промышленноçĕн ĕçĕ çинчен пыракан пренисем пирки Черчилль çапла каланă: эпĕ çак ыйту тăрăх общинăсен палатинче тĕплĕн каласа пама тăрăшăп, тенĕ.

Наукăпа искусство деятелĕсем Англипе Совет Союзĕ хушшинчи килĕшӳ çинчен

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). ТАСС отделенине политикăллă деятельсенчен, наукăпа искусство представителĕсенчен нумай телеграммăсем пыраççĕ, çав телеграммăсенче вĕсем Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешесси çинчен ССР Союзĕпе Великобритани хушшинче тунă килĕшӳ çине хăйсем мĕнле пăхни çинчен каласçĕ. Çав заявленисенчен хăшне пĕрне илсе кăтартатпăр:

ХАРГОР -- Чикаго университечĕн профессорĕ

ССР Союзĕпе Англия пĕрле кĕрешни паха результатсем пама тивĕçлĕ. «Гитлерла Германи» текен терминпа фашистла правительсемпе Германи халăхĕ хушшинче уйрăмлăх пуррине палăртма кирлине кăтартса панă. Çак уйрăмлăха çавăн пекех Америкăри мĕнпур прогрессивлă çынсем те йышăнаççĕ.

Франци драматургĕ АНРИ БЕРНШТЕЙН

Гитлер çĕнтерес пулсан, Франции чуралăха персе чикеççĕ, Франци халăхне вара варварла система пулăшнипе пĕтерсе тăкаççĕ. Паян, Францин никама пăхăнманлăх куянче (июлĕн 14-мĕшĕнче), мĕнпур чăн-чăн французсем тата чăннипех те Франци майлă тăракан çынсем çакна кĕтеççĕ: 1789 çулти революци хăйĕн тăшманĕсене тулашра та, çавăн пекех çĕршывра хăйĕнче те çĕнтертĕр, теççĕ. Кашни француз, вăл предатель мар пулсан, çакна шанса тăрать: Англипе Совет Союзĕ хушшинчи килĕшӳ Гитлера сирпĕтсе пăрахма тата пĕтĕм тĕнчене ирĕке кăларма май парать.

Нимĕç писателĕ ГЕНРИХ МАНН

Совет Союзĕпе Англи хушшинче килĕшӳ туни пысăк та паха событи пулса тăрать. Вăл нимĕçсем вăрçăри çитĕнӳсем çинчен мухтанса сӳпĕлтетнинчен пахарах. Çак килĕшӳ мĕнле вырăн йышăнса тăнине Берлин мораль енĕпе те, çавăн пекех вăрçă енĕпе те туйса илĕ. Вăрçăри хăват чунхавал вăйĕнчен тухса тăрать, çакă вăл — союзниксем енче, вăрçăна пĕрле тата ăнăçлăн вĕçлесси çинчен килĕшӳ туни союзниксен вăйне, фашизма çĕмĕрсе тăкас кăмăлне икĕ хут ӳстерет. Вĕсем çине пĕтĕм тĕнче шанса тăрать.

Франци публицисчĕ ПЕРТИНАКС

Великобританипе Совет Союзĕ практикăра пĕрлешĕрĕç. Халĕ пĕтĕм тĕнчере пыракан кĕрешӳре çĕршывсен икĕ группи валли — çаратуллă, хаяр завоеванисемпе пурăнакан çĕршывсем валли, тата тĕнчери правăна сыхласа хăварассишĕн кĕрешекен çĕршывсем валли кăна выран юлчĕ. Пĕр-пĕрипе вăрçакан çак вăйсем хушшинче вăтаçĕртен иртсе пыракан çул çук. Çак кĕрешӳ тĕллевĕсем уçăмлăнах палăрчĕç, çавăнпа та вăл мĕнпе вĕçленессинчен пирĕн хăрамалли çук. Материальнăй ресурссем тĕлĕшĕнчен вăйлăрах пулни юлашкинчен Англипе Совет Союзĕ, хальхи вăхăтра Пĕрлешӳллĕ Штатсем активлăн пулăшакан условире кĕрешекен Англипе Совет Союзĕ çĕнтересси патне илсе пырать. Франци тăван çĕршывсăр тăрса юлнă патриочĕсем пурте вырăс çарне, хăйĕн геройла ĕçĕсемпе çĕнтерӳ кунне çывхартса пыракан вырăс çарне пĕтĕм чĕререн саламлаççĕ.

Англи авиацийĕн Германири ĕçĕсен результачĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Лондона килекен сведенисем çакăн çинчен каласçĕ: Англи авиацийĕн атакисем вăйланни Германине калама çук пысăк сиен кӳреççĕ. «Таймс» хаçатăн авиаци обозревателĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бременри Фокке-Вульфăн авиаци заводчĕсене калама çук пысăк сиен кӳнĕ; çак заводсенче «Кондор» тата «Курьер» йышши самолетсем туса кăлараççĕ. Çавăн пекех Кильри, Гамбургри, Вильгельмсхафенри промышленноçлă предприятисене те вăйлăн çĕмĕрнĕ. Индустриллĕ Рур çине питех те вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ, çавăнпа та унăн çĕмĕрĕлнĕ предприятисене юсама вăхăт питĕ сахал е пачах та çук. Лондонри официальнăй çынсенчен килекен сведенисенче çапла кăтартса параççĕ: çак пысăк хулара бомбăсем пăрахнипе сиенленмен промышленноçлă районсем пĕрре те çук. Пĕррехинче Гамбург çине вăйлăн пырса тапăннă хыççăн ӳкерсе илнĕ фото çине пăхса çакна палăртнă: питех те пысăк 36 предприятине е пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă, е пысăк сиен кӳнĕ. çĕршер вакă предприятисене те чылаях пысăк сиен кӳнĕ. Англи авиацийĕ Людвигсхафен çине майăн 15-мĕшĕнче пырса тапăннă вăхăтра хими завочĕсене, çавăн пекех тата çар склачĕсене 16 склада яхăн аркатса тăкнă.

Испанири Ла Линеа тата Кампаменто хулисем çине бомбăсем пăрахни

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Гибралтартан пĕлтернĕ тăрăх, Ла Линеа хулинче пурăнакансенчен сумайĕшĕсем çапла пĕлтереççĕ: Испанири Ла Линеа тата Кампаменто хулисем çине Итали самолечĕсем бомбăсем пăрахнин сăлтавĕ çакăнта: Совет Союзне хирĕç кĕрешмешкĕн доброволецсене пухас çĕрте çав хуласем нимĕнле пулăшу та паман.

Швецири хаçатсем Финляндири фашистсен захватчикла планĕсене тăрă шыв çине кăлараççĕ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Финляндири власра тăракан ушкăнсем хăйсем Гитлер приказĕ тăрăх Совет Союзне хирĕç пуçланă вăрçăн чăн-чăн тĕллевĕсене тĕплĕн пытарса тăраççĕ. Вĕсем «оборонăллă» вăрçă çинчен демагогиллĕ сăмахсем каласа, Финлянди халăхĕпе тĕнчери общественноçа улталама хăтланаççĕ, хăйсен агрессиллĕ планĕсем çинчен лĕр сăмах та шарламаççĕ. Ку суя сӳпĕлтетĕве çак кунсенче Маннергейм хăй ирĕксĕрех тăрă шыв çине кăларнă. Хăй кăларнă приказра вăл Совет Карелине туртса илме ӳçăнах чĕнет. Финляндин агрессивлă политикине Швецири хаçатсем хытă сивленĕ.

«Упсала Нюа Тиднинг» хаçат ака мĕн çырать:

«Хĕвелтухăç Карели пирки ăмсанма Финляндин историллĕ право е мĕнле те пулин урăх право пур тесе шутлама май çук. Финляндин çавăн пек ĕмĕтĕсем акă мĕне пĕлтереççĕ: Финляндия çурçĕр енчи çĕршывсен политикине пăрахрĕ; ютçĕршывсем çине алă çĕклесси вĕсемшĕн яланах çавтери ют япала пулнă».

«Эпир Маннергейм приказне питех те тĕлĕнсе вуларăмăр, — тесе çырать «Гетеборг постен» хаçат. — Унăн заявленийĕ Финляндире хăйĕнче канăçсăрлăх пуçласа ярĕ, тесе шутламалла». Нимĕçсемпе финн фашисчĕсен захватчикла шухăшĕсене тăрă шыв çине кăларни, тет хаçат, финн халăхĕн кăмăлсăрлăхне татах та ытларах ӳстерет, финн халăхĕ Совет Союзне хирĕç вăрçасшăн мар.

«Нюа Даглигт Аллеханда» хаçат çапла çырать: «Финляндипе Швеци хушшинчи политикăллă туслăхăн никĕсĕ вăл — халичченхи чикĕсене сыхласа усрасси пулать, тесе шантарса каларĕ. Анчах та халĕ ĕнтĕ Маннергейм çапла калать: Карелине, урăхла каласан, Россия аллинчи территорине туртса иличчен хĕçе алăран пăрахмастăп, тет вăл. Маннергейм хăйĕн умне лартнă тĕллеврен пысăк хăрушлăхсем тухса тăма пултараççĕ».

Финляндири социал-демократсен главнăй органĕ «Суомен сосиали-демократти» хаçат та Маннергеймран пăрăнса тăма васкать: «Хĕвелтухăç Карели çирĕп историллĕ чикĕсене нихăçан та кĕмен, — тет хаçат. — Маннергейм приказĕнчен çакăн пек вывод тума пулать: Финляндин вăрçăри тĕллевĕсене улăштарнă, анчах та эпир ун çинчен нимĕн те пĕлмен».

Румынири фашистсем террора вăйлатаççĕ

ЛОНДОН, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Румынири партизансем Германи оккупанчĕсемпе Румыни çарне хирĕсле ĕçсене ытларах та ытларах вăйлатса пыраççĕ. Партизансем Германи офицерĕсемпе салтакĕсем çине тапăнаççĕ, кĕперсене сирпĕтсе яраççĕ, поездсене рельсăсем çинчен кăларса ярса çĕмĕреççĕ, боеприпассемпе горючи выртакан складсене вут чĕртсе çунтараççĕ. Партизанла движени хăрушла сарăлса кайнă май, июлĕн 9-мĕшĕнче генерал Антонеску декрет кăларнă. Çав декретра вăл: правительство аллине лекнĕ партизансене вырăнтах персе вĕлеретпĕр, тесе юнаш хăратать.

Хĕрлĕ Çаран боевой ĕçĕсем çинчен ютçĕршывсенче мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Швейцарири «Нейс цюрхер цейтунг» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла çырать: вăрçă пуçланнăранпах вырăс çарĕсем Германи çарĕсене вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Нимĕçсем ' çакна йышăнаççĕ: юханшывсем урлă каçма е уйрăм пунктсене оккупаци тума хăтланнă чухне вĕсене хирĕç артиллерипе вăйлăн пенине тата сывлăшран тапăннине тĕл пулаççĕ. Вĕсене хирĕç тăрас çĕрте вырăссен сывлăш-çар вăйĕсем калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнă.

АНКАРА, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă мĕнле пыни çине Турцири хаçатсем тимлĕн çаврăнса пăхаççĕ. «Едигюн» журнал Ворошилов, Тимошенко тата Буденный портречĕсене пичетлесе кăларнă. Килекен пĕлтерӳсем, тесе çырать журнал, çакăн çинчен кăтартса параççĕ: Хĕрлĕ Çар тăшмана вăйлăн хирĕç тăрса çапăçать. вырăнĕ-вырăнĕпе наступленине куçнă. Çакăн çинчен калакан пĕлтерӳсем те пур: совет çарĕ татах та ытларах организациленсе пысăк çапăçусене хатĕрленет.

«Бурса» хаçат çапла çырать: «Германия Хĕрлĕ Çар тылĕсене аркатса яма шаннă тата парашютистсен десантчĕсем çак задачăна пурнăçа кĕртĕç, тесе шутланă. Анчах та халлĕхе çак ĕçре çитĕнӳсем тунин паллисем те çук-ха.

«Ени Асыр» хаçат Германипе майлă пулса вăрçакан çĕршывсем çинчен асăнса, çапла палла тăвать: çав çĕршывсем ирĕклĕх тата никама пăхăнмасăр пурăнассине тăвас шухăшпа пурăнаççĕ, вĕсем хăйсене пусмăрта тытса усракансене çавтери кураймаççĕ. Хаçат çав çĕршывсене «Германи жертвисем» тесе çырать.

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Совет авиацийĕ çинчен Англири хаçатсем пысăккăн хакласа çыраççĕ: Заголовоксемпе статьясенче хаçатсем çапла палла тăваççĕ: Совет авиацийĕ Германин бронетанковăй вăйĕсене сисĕнмеллех вăйлăн пыра-пыра çапать. Сăмахран, «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат советăн сывлăш-çар флочĕ çĕр çинчи чаçсене пулăшас çĕрте калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать, тесе çырать. Хаçатăн Мускаври корреспонденчĕ совет çарĕ нимĕçсен наступленине татăклăн тытса чарса тăнă вăхăтра совет авиацийĕ тĕлĕнмелле пысăк активлăх кăтартнине палла тăвать.

Югославири листовкăсем

СТАМБУЛ, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Кунта листовкăсем пит нумай илсе килнĕ. Вăл листовкăсене юлашки вăхăтра Югославин çулăмлă патриочĕсем вăрттăн кăларнă. Аялта уйрăм листовкăсенчен выдержкăсем илсе кăтартнă. «Югославири рабочисем, хресченсем, интеллигенци тата мĕнпур патриотсем! Вĕсем пирĕнпе тăванлă аслă Совет халăхĕ çине тапăнчĕç, юн тинĕс пек пулса юхать. Гитлер хăйĕн тĕллевĕсене пурнăçа кĕртме тăрăшать. Вăл славянсен аслă расинчен чурасен раси, Германи расинчен — господасен раси туса хурасшăн. Германи салтакĕн атти хăйĕнпе пĕрле чуралăх тата славянсене физически пĕтерсе тăкассине илсе пырать. Çакна югославсем хăйсен опычĕпе курса пĕлнĕ, вăл опыта пиншер пурнăçа пĕтернипе, Белграда тата пирĕн тăван çĕршыври ытти чаплă та илемлĕ нумай хуласене çĕмĕрсе аркатса тăкнипе туяннă. Эпир сире славянсен аслă халăхĕн правипе ирĕклĕхĕшĕн кĕрешĕве тухма чĕнетпĕр. Югослави сăрттăвĕсенче партизанла движени кунран кунах ӳссе пырать, пирĕн пĕтĕм çĕршыври патриотсем Германи, Итали тата Венгри оккупанчĕсемпе пусмăрçисене Югославирен кăларса ывăтас сехет сывхăрса килет.

Югославири тӳрĕ кăмăллă патриотсем! Тăван çĕршывшăн, славян халăхĕсен тăванлăхĕшĕн, пирĕн государствăн ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн—йывăр та пĕртен-пĕр тĕрĕс тата çĕнтерӳллĕ сут çине — гитлеризма пĕтерсе тăкас çул çине тухăр. Мухтав патриотсене! Хăюллă пулни çĕнтерӳ патне илсе пырать! Ирĕклĕ Югославишĕн!».

Нимĕçсем Францири Брест хули çине бомбăсем пăрахнă

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 15-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Лиссабонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, унта Брестран тарса пынă çын çапла калаçа панă: нумаях пулмасть Германи самолечĕсем Брестри граждăнла халăх çине виçĕ сехет хушши бомбăсем пăрахса çӳренĕ, мĕншĕн тесен граждăнла халăх нимĕçсене хирĕç саботаж тăвать. Кунта илнĕ сведенисем тăрăх, бомбăсем пăрахнă вăхăтра нимĕçсем хула центрне пысăк сиен кӳнĕ. Бомбăсем граждăнла госпиталь çине ӳкнĕ, госпитальре 100 ача ытла вилнĕ. Нимĕçсем бомбăсем пăрахса пурĕ 300 çынна вĕлернĕ. Бомбăсем пăрахнă вăхăтра Германи власĕсем граждăнла халăха бомбоубежищĕсемпе усă курма чарнă. Каярахпа нимĕçсем çак ĕçшĕн англичансене айăплама хăтланнă.

Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартакан митинг

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). Мексикăран пĕлтернĕ тăрăх, унта митинг пулса иртнĕ. Митингра ултă пин çын пулнă. Митингра Мексикăри компартин генеральнăй секретарĕ Энсинас, Мексикăри хресчен çамрăкĕсен конференцийĕн секретарĕ Хезус Секундо, Францири палла писатель Ренэ Маршан тата Мексикăн çĕрĕç министрĕ пулнăскер Бассольс Нарцисс сăмах тухса калана. Ыйтăннă резолюцире митингра пулнисем Гитлера хирĕç кĕрешнĕ çĕрте Хĕрлĕ Çар татăклăнах çĕнтерессине шанса тăнине кăтартса панă.

Германири шухăш-кăмăлсем çинчен Англи хаçачĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, июлĕн 16-мĕш. (ТАСС). «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçатăн Стокгольмри корреспонденчĕ çапла çырать: Германи çарне йывăр çухатусем кӳни тата унăн стратегиллĕ тĕп планĕсене аркатса яни мораль тĕлĕшĕнчен Германи халăхне пит вăйлăн пырса тивнĕ. Берлинри вокзалсем умĕнче кашни кунах çынсем пĕр çĕре пухăнса нимĕн шарламасăр пăхса сăнаса тăраççĕ, унта Польшăри тата Хĕвелтухăç Пруссири çынста шăнăçаймасăр тулса ларнă госпитальсенчен аманнăсем салтаксемпе санитарнăй поездсем вĕçĕмĕр нумай пырса тăраççĕ. Корреспондент çапла çырать: Германи халăхĕ хăй те пĕлсе тăрать пулин те, анчах ютçĕршывсенчен пыракан сведенисем Германи халăхне татах та тепĕр хут çакăн çинчен ĕнентереççĕ: кампанин пирвайхи этапĕсенче Германин кашни кунах 60 пин çын пĕтнĕ, кĕрешӳ сивĕчленсе, вăйланса пынă май çав çухатусем татах та ӳсеççĕ. Хĕрлĕ Çар нимĕçсене çав тери хытăн тăнтарнă, вăрçа вăрăма тăсни вĕсемшĕн питех те хăрушă пулса тăрать. Кунта тата Англин ӳснĕçемĕн ӳсе пыракан хаватне шута илес пулать. Англия хĕвеланăç флангĕнчен Германи умне пысăк хăрушлăх кăларса тăратать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чебоксарский кооперативный техникум
об'являет,
ЧТО ПРИЕМ СТУДЕНТОВ В ТЕХНИКУМ С 10 ИЮЛЯ 1941 ГОДА ПРЕКРАЩЕН
Дирекция.

УПРАВЛЕНИЕ ПО ДЕЛАМ ИСКУССТВ
ПРИ СОВНАРКОМЕ ЧУВАШСКОЙ АССР
об'являет дополнительный прием в Чувашскую оперную студию при Саратовской Консерватории
Прием заявлений до 15 августа с. г.
Заявления направлять по адресу: Чебоксары, Дом Советов, Управление по делам искусств при СНК ЧАССР.
2—1

КАНАШСКАЯ РЕСПУБЛИКАНСКАЯ АВТОШКОЛА
об'являет
НАБОР НА КУРСЫ ШОФЕРОВ III и II КЛАССОВ НА КАРБЮРАТОРНЫЕ И ГАЗОГЕНЕРАТОРНЫЕ МАШИНЫ.
На курсы принимаются лица обоего пола не моложе 18 лет.
Срок обучения 2,5 месяца. Стоимость обучения 555 рублей.
Обучение на курсах производится как за счет поступающих, так и за счет предприятий и организаций.
Заключаются договора с предприятиями и учреждениями.
Заявления принимаются до 20 числа каждого месяца.
Для ответа приложить марок на 60 коп.
АДРЕС: гор. Канаш, автовокзал, автошкола. Телефон № 76.
ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, сыруçемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.
НТ 4139
Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ Ъ 345. ф. 6 84 п. л.